24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941
ИЮЛЬ
9
ЮНКУН
159 (5874) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Лĕтĕм тĕнчери пролетарийĕсем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Отечественнăй вăрçăн геройĕсене—мухтав

Хăй совет халăхне чĕнсе каланинче пирĕн юратнă çулпуç Сталин юлташ çапла каларĕ:

«Пирĕн Государствăна туса хунă аслă Ленин çапла каланă: совет çыннисен чи кирлĕ пахалăхĕ вăл—паттăрлăх, хастарлăх, кĕрешӳре хăрама пĕлменни, пирĕн тăван çĕршывăн тăшманĕсене хирĕç халăхпа пĕрле çапăçма хатĕр тăни пулать, тенĕ. Большевикăн çак питех те лайăх пахалăхĕ Хĕрлĕ Çарти, пирĕн Хĕрлĕ Флотри миллионшар çынсен тата Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсен тивĕçлĕхĕ пулса тăни кирлĕ».

Пирĕн аслă халăхăн, мĕнпур йывăр испытанисем витĕр чыслăн çĕнтерсе тухнă халăхăн мĕнпур мухтавлă историйĕ, Ленин—Сталин партийĕн—халăх телейĕшĕн кĕрешекен тимĕр пек çирĕп борецсене туптаса кăларнă тата пирĕн аслă çĕршыва чечекленекен пурнăç патне илсе ситернĕ партин пĕтĕм боевой историйĕ пирĕн халăха вăйлă характерлă туса воспитани парса ӳстерчĕç. Ленинăн, Сталинăн тĕлĕнмелле героизмĕ тата вĕсем воспитани парса ӳстернĕ никам çĕнтерейми çынсен когортисен героизмĕ эпир пурте—кĕçĕннисенчен пуçласа аслисем таранах — витĕр тухнă шкул пулса тăнă. Пурне те облательнăй йĕркепех хутла вĕрентмелле тăвиччен малтан, героизма вĕрентесси пирĕн çĕршывăн политикăллă пурнăç никĕсĕсен никĕсĕ пулнă. «Малалла, тăшман çинелле вĕçĕмсĕр хăюллăхпа, хăвăрттăн, татăклăн наступлени туса пымалла пулнă чухне... Эпир наступлението çавăн пек тунă та. Кирлĕ пулсан, çакна татах та тепĕр хут, тата тепĕр хут çеç мар тума пултарать» (Ленин).

Халĕ, фашистла вăрă-хурахсем Совет Союзĕ çине тапăннă чухне, ăна вăрçа туртса кĕртнĕ чухне, совет çыннин пахалăхĕсем, нумай çулсем хушши вут-çулăмпа çил-тăвăлсем витĕр тухса туптанă пахалăхĕсем, уйрăмах вăйлă палăрççĕ. Вăрçăн кашни кунĕ, кашни сехечĕ çапăçусем пынă çĕрте совет воинĕсем кăтартакан халиччен нихăçан курман хăюллăхпа паттăрлăх çинчен калакан фактсем çĕршерĕн ӳссе пыраççĕ. Палăртнă тĕллеве пурнăçа кĕртес çĕрте вĕсен ирĕк-кăмăлĕ хурçа пек çирĕп пулни, вĕçĕмçĕр хастарлă пулни, лăпкăлăх, чăтăмлăх тата гитлерла варварсене Хĕрлĕ Çар пурпĕрех çĕнтерессине шанса тăни пĕтĕм этемлĕхе хĕпĕртеттерсе савăнтарать. Пĕтĕм этемлĕхĕн тăшманĕ — юнлă фашизм пулса тăрать.

Акă эскадрилья командирĕ капитан Гастело кăтартнă геройла хăюллă ĕç. Тăшман зенитăкин снарячĕ унăн бензин тултармалли бакне пырса тивнĕ. Самолета вут çулăмĕ çавăрса илнĕ. Хăюллă та паттăр командир самолета фашистсен пĕр çĕре пухăнса тăнă автомашинисемпе бензин цистернисем çине тытнă. Вуншар автомашинăсемпе цистернăсем герой самолечĕпе пĕрлех сирпĕнсе арканса кайнă.

Кĕçĕн лейтенант Здоровцев юлташ, хăйĕн патронсем йăлтах пĕтсе çитсен, хăйĕн истребителĕпе нимĕçсен «Ю-88» текен бомбардировщикне пырса çапать, истребитель сиенленмесĕрех юлать. Кĕçĕн лейтенант Харитонов юлташ руль винтипе тăшманăн «Ю-88» йышши тепĕр самолетне касса пĕтерсе тăкать, хăй нимĕн сиенленмесĕрех юлать. Старший лейтенант Терехин юлташ çапăçура тăшманăн пĕр самолетне персе антарать те, хăйĕн самолечĕпе тăшманăн тепĕр икĕ самолетне пырса çапса çĕмĕрсе тăкать, хăйĕн машини ванса кайсан, вăл парашютпа сикет. Çавăн пек ĕнтĕ пирĕн мухтавлă герой-летчиксем.

Танкистсем те вĕсенчен юлмаççĕ.

Кĕçĕн лейтенанта Юхнича фашистсен пилĕк танкĕ хупăрласа илнĕ пулнă. Юхнич юлташ орудирен тĕл персе тăшманăн тăватă машинине пĕтерсе тăкнă, çакăн хыççăн хăйĕн танкне çавтери хăвăрт ярса, тăшманăн пилĕкмĕш танкне умран тӳрех пырса çапса, ăна та пĕтерсе тăкнă.

Политрук заместителĕ Лисневский юлташ хăйĕн ремонт тăвакан танкĕ çинчен персе противникăн пĕр самолетне персе антарнă, тепĕр виççĕшне каялла хăваласа янă, танкне вăл персе çĕмĕрнĕ машина çăсĕсемпе юсанă, хăйĕн çăсĕнче вăл: «эпĕ çапăçусенче пачах пулмăн», тесе йăвашшăн каласа панă. Çавăн пек çапăçаççĕ ĕнтĕ отечественнăй вăрçă участникĕсем пурте.

Противник танкĕсен ушкăнĕ, авиацине артиллери пулăшнипе, юханшыв урлă каçса пирĕн артиллери дивизионĕ çине атака тума пуçланă. Дивизион командирĕ капитан Синявский çухалса кайман. Вăл тӳрĕ тĕллесе тăшман танкĕсем çине пеме хушнă. Артиллеристсем тĕл персе тăшманăнне 37 танк пĕтерсе тăкнă.

Старший лейтенант Нестеровăн эскадронĕ тăшманăн пехота батальонне хирĕç çапăçнă. Лейтенант Ясинский, кăкăр таран тарăнăш шывра тăрса, фашистсем хĕреслĕ майпа персе тăнине пăхмасăрах, артиллерине ăçталла пемеллине виçĕ сехет хушши кăтартса тăнă, çапла тĕл пенипе тăшманăн огневой точкисемпе чĕрĕ вăйне пĕтерсе тăкнă.

Кĕçĕн сержант Бельскипе красноармеец Иванова противникăн икĕ вавочĕ хупăрласа илнĕ пулнă. Вĕсем унтан паттăрăн татса тухса, тăшман ăçта вырнаçни тата унăн йышшĕ çинчен калакан сведенисене штаба илсе çитернĕ.

Конниксем нимĕçсемпе румынсен гвардийĕ сыхласа тăракан кĕпере штурмлаççĕ те, артиллерирен вăйлăн персе тăнине пăхмасăрах, кĕпере йышăнаççĕ. Штыксемпе çапăçма пуçласан лейтенант Железняк çичĕ тăшмана штыкпа тирсе вĕлерет, красноармеец Истомин татах саккăршне пĕтерсе тăкать. Çакă вăл фронтăн мĕнпур участокĕсенче кăтартакан массăллă героизмран, халăхăн чăн-чăн хăюллăхĕнчен илнĕ нумай мар примерсем кăна пулса тăраççĕ. Летчиксем, артиллеристсем, моряксем, саперсем, стрелоксем сумне хăйсен вăйĕсене партизансем те пĕрлештереççĕ. Вĕсен ĕçĕсем тăшмана, халăх тарăхăвĕн вĕçĕмсĕр хăватне çийĕнчех туйса илнĕ тăшмана хыттăн хăратса тăраççĕ.

Çавăн пек çапăçаççĕ ĕнтĕ хăйсен отечествишĕн совет çĕршывĕн геройпатрипочĕсем. «Иртнĕ икĕ эрне хушшинче,—тесе çырать Стокгольмри «Дагенс нюхетер» хаçат,—вырăссен оборони противник кĕтнисенчен темиçе хут вăйлă пулчĕ». Фашистсем хăйсем те йышăнаççĕ: Хĕрлĕ Çар вĕсемшĕн, хăйсем халиччен тĕл пулнă противниксенчен пачах та урăхла противник пулса тăрать.

Çакă вăл тăшмана çĕнтересси — совет çыннисен кашнин ĕçĕ пулнă пирки пулма пултарнă. Çĕнтермелле! — эпир паян пурăннин тĕп шухăшĕ çакă пулса тăрать, çакă вăл Совет Союзĕнчи 200 миллион граждананинран кашнин пĕртен-пĕр тата пурне те çавăрса илекен задачи пулса тăмалла.

Героизм совет халăхĕн пурнăçне, йăлине кĕнине отечественнăй вăрçă уйрăмах ӳссăн кăтартса пачĕ.

Героизм вăл — пĕртĕллевлĕ пулни, вăл—тăван çĕршыва ырлăх тăвассишĕн кирек-мĕнле жертвăсем тӳсме те хатĕр тăни, вăл — пире пăхса ӳстернĕ отечество умĕнче хамăрăн тивĕçе пурнăçа шеллемесĕр хастарлăн пурнăçа кĕртме пĕлни пулать. Камăн нервăсем çирĕпрех, камăн хăюллăх тата хăйне шанса тăрасси ытларах — çав çын çĕнтеретех. Тирпейсĕрлĕх, йăвашчулăх, ӳрĕк-сӳрĕклĕх ан пултăр. Кирек-мĕнле личнăй интерессене те отечествăна сыхлас аслă интерессене пăхăнтармалла.

Йăлара, ĕçре хамăра вăрçăри пек туяр, тимлĕн тăрса çапăçнă кашни сехет, хăюллăх, кашни секундăрах сыхăлăхлă пулни вăрçăра питех те кирлĕ.

Пĕр сехет те канмалла мар! Тĕллевсĕр пĕр утăм та ярса пусмалла мар! Тăван çĕршывра вăрçă пынине çывăрнă чухне те асра тытмалла. Хăйĕн мĕнпур вăйне çĕнтерӳ тума памасть пулсан, вăл çын Совет Союз гражданинĕн аслă та хисеплĕ ятне илтме тивĕçлĕ мар.

Пирĕн тăван çĕршыва хӳтлекен паттăр çынсен, Хĕрлĕ Çарпа Флот боецĕсен, командирĕсемпе политработникĕсен хăюллă ĕçĕсем эпир хамăра-хамăр тытказламалли норма пулса тăччĕр, вĕсен çирĕплĕхĕ — пирĕн çирĕплĕх пултăр, отечествăшăн вĕсем хăйсен пурнăçне шеллемесĕр хатĕр тăни — эпир пурăмăр та хатĕр тăни пултăр.

Эпир геройла халăха тивĕçлĕ аслă пурнăçпа пурăнма çуралнă. Эпир çĕнтеретпĕрех!

Отечественнăй вăрçăн геройĕсене — мухтав!

(«ПРАВДА» умтатьи, июлĕн 8-мĕш).

Çар ĕçне тимлĕн вĕренеççĕ

КУКЕÇ. Германи фашисчĕсем пирĕн юратнă тăван çĕршыв çине вăрçăпа улталăн тапăннине ответлесе, предприятисемпе артельсенче рабочисем ĕç тухăçлăхне пысăккăн ӳстереççĕ. Вĕсем продукцине йышлăн кăларса, мухтавлă Хĕрлĕ Çара пулăшаççĕ. Çĕнял Уйкассинчи промартель членĕсем нормăна ик-виç хут тултарса ĕçлеççĕ. Артель членĕсем ĕç нормине шучĕпе кăна мар, пахалăх енĕпе те ытлашшипех тултараççĕ. Г. Антонов юлташ нормăна 200 процент, М. Кузьмин, А. Дмитриева юлташсем 170-шер процент, П. Михайлова—167 процент тултараççĕ.

Промартель кашни кунхи графика 140—170 процент таран тултарса пырать. Çапла ĕçленипе артель çĕнĕл 1-мĕшне çулталăкри плана 130 процент тултарнă. Çав вăхăтрах продукцин хăйне ларакан хакне 8 процент чакарнă.

Артель членĕсем производствăра лайăх ĕçленипе пĕр вăхăтрах çар ĕçне те тимлесе вĕренеççĕ.

П. НИКИТИН.

Совет Информаци Бюровĕнчен

(Июлĕн 7-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ)

Июлĕн 7-мĕшĕнче **Остров, Полоцк, Лепель, Бобруйск, Новоград-Волынск** тата **Могилев—Подольск** енĕсенче кунĕпех вăйлă çапăçусем пынă.

Фронтăн çурçĕрти участокĕнче пирĕн войскăсем Кандалакша, Ухта тата Кексгольм енĕсенче çапăçусем туса пынă, противникăн пирĕн территори çине савăлланса кĕнĕ чăçĕсене поражени кӳнĕ.

Остров енче пирĕн войскăсем противникăн мотомеханизированнăй пысăк чăçĕсене хирĕç вăйлăн çапăçнă, вĕсене çурçĕр-хĕвелтухăç еннелле кайма чарса тăраççĕ.

Полоцк енче противника хирĕç хаяр çапăçусем пыраççĕ. Противник хăйĕн пысăк вăйĕсене Западная Двина юханшывĕн çурçĕр хĕррине каçарма темиçе хутчен те хăтланнă. Пирĕн войскăсем хăйсен позицийĕсене çирĕппĕн тытса тăраççĕ.

Лепель районĕнче пысăк çапăçусем пыраççĕ.

Бобруйск енче противник Днепр шывĕ урлă каçма темиçе хутчен те хăтланнă, анчах пирĕн войскăсем питех те вăйлăн персе тăнипе противник, пысăк çухатусем тӳссе, хăйĕн малтанхи вырăнне чакнă.

Новоград-Волынск енче пирĕн войскăсем калама çук вăйлăн çапăçса, противникăн мотомеханизированнăй пысăк чăçĕсене малалла куçса пыма памаççĕ.

Могилев—Подольск енче пирĕн войскăсем противника хирĕç хаярăн çапăçаççĕ. Çак енчи çапăçусенче пирĕн чăçсем, противник батальонĕсенчен пĕринне каллех чакмалли çулĕсене татса илсе, ăна пĕтерсе тăкнă.

Пирĕн авиаци июлĕн 7-мĕшĕнче противникăн мотомеханизированнăй чăçĕсене вăйлăн пыра-пыра çапнă тата противник аэродромĕсем çине ăнăçлăн пыра-пыра тапăннă.

* * *

Каçхине разведка тăвакан самолетсем Ш. ялĕ çывăхĕнче тăшманăн пехота тата танковăй чăçĕсем йышлăн пухăнса тăни çинчен пĕлтернĕ. Ирхине, артиллерирен персе тăнă хӳтлĕхпе, фашистсем наступлени пуçланă. Н-ски соединенири боецсем нимĕç войскисен атакине виçĕ хутчен сирсе янă. Пилĕк сехет хушшинче фашистсен, вилнисемпе аманнисене пĕрле илсен, 1.300 салтак пĕтнĕ. Пилĕк сехет хушши оборонăра вăйлăн çапăçнă хыççăн, Н-ски соединени чăçĕсем, хăйсенчен ытларах йышлă противник хĕснине пула, хамăран территори çине пĕр километр çурă шалалла куçнă. Сылтăм флангра нимĕçсен наступлени туса пыракан 300 танкĕнчен 50 яхăн танкĕ малалла ыткăннă, анчах çийĕнчех мерăсем йышăнса противникăн танковăй авангардне ун хыççăн пыракан пехотăран татса илнĕ. Вĕсем татса кĕнĕ вырăнтан çичĕ километрта фашистсен машинисене совет танкĕсен пысăк колонни атакăланă та вĕсене пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнă. Ун хыççăн танксен колонни нимĕçсен пехоти çине ыткăннă. Фашистсен атакине сирсе янă, тăшмана пысăк çухатусем кӳнĕ. Нимĕçсен вилнисемпе аманнисем пĕрле 7 пин çын пĕтнĕ. Нимĕçсен 1.500 ытла салтакĕ парăнса тытăна лекнĕ.

* * *

Тăшман хупăрласа илнинчен тухнă хыççăн, политрук Изгурский, лейтенант Комаров тата красноармеец Стефанцев хăйсен чăçĕсем патне çул тытнă. Вăрманти утмăçул тăрăх пынă чухне вĕсем лайăх маскировка тунă пĕр пĕчĕк пӳрте тата унран аякрах мар çĕрте палаткăсене асăрханă. Нимĕçле каланчи аванах илтĕннĕ. Ку вăл тăшман штабĕ пулнине çийĕнчех тавçăрса илсе, геройсем ун çине тапăнма шутланă. Тăшманшăн пачах кĕтмен çĕртен красноармеецла «урра» кĕрлесе кайнă, штаба гранатăсем пырса ӳкнĕ. Нимĕçсен пĕр полковникне тата штабри икĕ офицерне вĕлернĕ. Тăшман нимĕн тума пĕлми аптăраса ӳкнĕ. Изгурский, Комаров тата Стефанцев юлташсем çакăнпа усă курнă. Вĕсем оперативлă документсем тултарнă чемодана питех те хăвăрттăн ярса илнĕ те, хӳтлĕхре тăракан автомобиль çине ларса хамăрниссем патнелле тухса вĕçнĕ.

* * *

Çĕнĕ позицисем çине куçнă чухне Хĕрлĕ Çар чăçĕсем С. ялтă юханшыв çинчи кĕпере çĕмĕрсе хăварнă. Нимĕç сапĕрĕсем—икĕ кун хушшинче кĕпере аран-аран юсанă, ун çине йывăçпа витнĕ. Çакăн хыççăн виççĕмĕш кунĕнче çĕрле нимĕçсен кĕпер патĕнче тăракан охрани çине кĕтмен çĕртен пысăк мар утрав çинчен пеме пуçланă, утрав çав вырăнтан инçех мар пулнă. Фашистсем утрав патне моторлă лодка кăларса янă, анчах ăна виçĕ граната сиенленĕ те, вăл путнă. Кĕпере хуралласа тăракан салтаксен ушкăнĕ утрав çине нимĕн йĕркесĕр пеме пуçланă. Çав утрав çинче хăмăшсем хушшинче хăюллă виçĕ партизан пытанса выртнă. Партизансем тăшмана юриех илĕртсе хăйсем çине пертернĕ. Шыв хĕрринчен кĕпер çине, вăйлăн персе тăнă вăхăтра, кĕтмен çĕртен алăпа ывăтмалли гранатăсем пырса ӳкнĕ. Германи салтакĕсемпе нимĕç салтакĕсем пĕр-пĕрин çине тăшманла пăхаççĕ. Халĕ ĕнтĕ вăрманта-и, çырмара-и е кӳлĕре-и нимĕç салтакĕн виллине тупни никама та тĕлĕнтермест. Финн халăхĕ Германи фашизмĕшĕн вăрçастăн мар. Çакна финн çарĕнчен массăллăн тухатуха тарни те лайăх кăтартса парать.

* * *

Сталин юлташ сăмахĕ ĕççыннисене çĕнĕрен те çĕнĕ паттăр ĕçсем тума хавхалантарать. Симферопольри авторемонтнăй заводри рабочисем Шуркин тата Петров хăйсен нормисене 200 процент тултараççĕ, токарь-револьверщица Рассева—150—180 процент, моторсен сборщикĕ Любецкой—250 процент тултараççĕ. Комплектовщик Костин фронта кайнă икĕ юлташĕ вырăнне ĕçлеме тăнă, вăл халĕ нормăна 300 процент тултарать. Дубинин, Киреев, Пугачева, Григорчук тата заводри ытти нумай рабочисем те кашниех икшер çыннăн ĕçлеççĕ. Симферопольри паровоз депозĕнчи токарьсем Рябой тата Болсун кулленех виçшер норма параççĕ, котельщик Степанов кунне 6 норма таран тăвать. Ленинградри предприятисенче нумай станокпа ĕçлекенсен хисепĕ хăвăрттăн ӳссе пырать. № заводăн машиностроительнăй цехĕнче ватă производственник фрезеровщик Карцев, фрезеровщиксем Мухин, Федотов, Аверьянов, Богданов икшер станокпа ĕçлеме пуçланă. Цехри фрезеровочнăй участокра пĕтĕмĕшпех нумай станокпа ĕçлеме тытăннă. Заводри нумай шлифовщиксем, токарьсем, револьверщиксем тата ытти рабочисем икĕ ытларах станокпа ĕçлеме пуçланă. Заводри рабочи Бильман отрезной пилĕк станок çинче ĕçлет. Сталин юлташ сăмахне ответлесе, Высокогорскри тимĕр-тăмăр рудникĕнчи (Свердловск облаçĕ) пур участоксенчи горняксем те стахановла вахтăна тăнă. Под'емниксен машинисчĕсем Котов, Пылаев тата Андрианов юлташсем сменăра под'емсен хисепĕ тĕлĕпше рудникшăн рекордлă çитĕнӳ тунă. Уралти предприятисене пенси илсе пурăнакан ватă кадровиксем каялла ĕçлеме пыраççĕ. Тагилри металлурги заводне Дружинин юлташ тавăрăннă, вăл домна патĕнче 45 çул хушши ĕçленĕ пулнă. Вăл Хĕрлĕ Çар ретне кайнă ывăлĕ вырăнĕнче ĕçлемелле.

Совет Информаци Бюровĕнчен

(Июлĕн 8-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ)

Июлĕн 7-мĕшĕнче **Остров, Полоцк, Лепель, Бобруйск, Новоград-Волынск** тата **Могилев-Подольск** (Украина) енĕсенче сарăлса кайнă вăрçă ĕçĕсем июлĕн 8-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле те вăйлăн пулса пынă.

Остров енче пирĕн чăçсем, противника хирĕç вăйлăн çапăçса, ăна малалла кайма чарса тăнă.

Полоцк енче Борковичи районĕнче противника хирĕç вăйлă та хаяр кĕрешӳ пырать.

Лепель енче противник пирĕн войскăсем çав участокра тăвакан контратакăсене хирĕç çапăçать. Çапăçу халĕ те пырать.

Бобруйск енче пирĕн чăçсем противникăнне йывăр танксем 35 çити тата унăн пехотин икĕ батальонне пĕтерсе тăкнă. Противник çак енче Днепр шывĕ урлă каçма хăтланнисене йăлтах сирсе янă, ăна пысăк çухатусем кӳнĕ. Тыткăна илнисем пур.

Новоград-Волынск енче противникăн танковăй тата моторизованнăй чăçĕсене хирĕç хаяр çапăçусем пыраççĕ.

Çак енчен кăнтăр еннерехре пирĕн войскăсем противника фланран тата тылран вăйлăн пырса çапса, унăн пехотин икĕ полкне çити пĕтерсе тăкнă.

Могилев-Подольск енче (Украина) пирĕн чăçсем противника хирĕç вăйлăн çапăçаççĕ, противник кунта Днестр шывĕ урлă каçма хăтланать. Çак енче пирĕн войскăсем противника пайăн-пайăн пĕтерсе тăкаççĕ.

Июлĕн 7-мĕшĕнче пĕр кун хушшинче пирĕн авиаци сывлăшпи çапăçусенче тата аэродромсенче противникăн 8 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн авиацин çав кун хушшинче 5 самолет пĕтнĕ.

* * *

Старший лейтенант Бундюк пĕр объект тĕлĕнче патрульте вĕçсе çӳренĕ. Сасартăк вăл фашистсен 4 самолетне курнă, çав самолетсем ăна курмасăрах вĕçсе иртнĕ. Лейтенант тăшман самолечĕсем хыççăн вĕçнĕ. Патне çитерехпе Бундюк хӳрере пыракан самолет çине пеме пуçланă. Самолета вут тивсе илнĕ те çĕре ӳкнĕ. Тăшман арпашăнса кайнипе усă курса, Бундюк иккĕмĕш самолечĕ çине пенĕ, ун хыççăн тепĕр икĕ самолечĕпе çапăçăва кĕрсе кайса, виççĕмĕш машинине персе антарнă. Фашистсен тăваттăмĕш самолечĕ çапăçăва кĕмесĕр каялла çавăрăнса кайнă.

* * *

Çак кунсенче Н-ски часть противникăн хăйĕнчен пысăкрах вăйĕсене атакăланă. Çапăçу тăшмана пĕтĕмĕшпех çĕмĕрсе тăкнипе вĕçленнĕ. Çапăçу пулнă вырăнта нимĕçсен 267 салтакĕ вилнĕ тата 130 салтакĕ аманнă. Çапăçу вăхăтĕнче боец Довжиков юлташ, нимĕç офицерĕсен ушкăнне пырса кĕрсе, виççĕшне штыкпа чиксе пăрахнă, ыттисем тарнă. Кĕçĕн политрук Петров юлташ темиçе минута хушшинче фашистсен 6 салтакне чиксе пăрахнă.

* * *

Тĕнчери хаçатсем Хĕрлĕ воинсен богатырла вăйĕпе паттăрлăхне пысăккăн хаклакан материалсене кашни кунах пичетлесе кăлараççĕ. Вăрçă ĕçĕсем сĕмĕрсе хăварнă тата каялла хăваласа янă. Пирĕннисем йышăннă территорине, чăтлăх вăрманта (çав вăрман хĕрринче тăшман штабĕ тăнă пулнă) лейтенант Гавриленко ротинчи красноармеецсем Румыни салтакĕсен темиçе вуншар виллисене тупнă. Тыткăна лекнисем кăтартса панă тăрăх, совет войскисене хирĕç вăрçассинчен пăрăнăшăн Румыни салтакĕсене Германи военщини перçе вĕлернĕ. Тыткăна лекнисем çапла пĕлтернĕ: çар чăçĕсен кашнин тылĕнчех нимĕçсен штурмовой отрячĕсем тăраççĕ, вĕсем румынсене, венгерсене тата словаксене чи пĕчĕк айăпшăнах пĕр хĕрхенмесĕр хĕнеççĕ тата перçе вĕлереççĕ. Германи салтакĕсем хăйсене валли лайăхрах çимĕçсене вăйпа туртса илеççĕ, час-часах союзниксен продовольстви обозĕсене çаратаççĕ. Румынсене нимĕçсен апат юлашкийĕсемпе тăранса пурăнма тивет. Тыткăна лекнĕ салтаксенчен пĕри çапла каласа панă: пĕр румын, икĕ ури те аманнăскер, нимĕç лейтенантне ура çине тăрса честь пама пултарайман, ăна çавăншăнах перçе вĕлернĕ.

* * *

Германири информаци бюровĕнчи сыеçсем нихăçан илтмен тискер хыçăнчи кĕперне çĕмĕрсе хăварнă. Нимĕç сапĕрĕсем—икĕ кун хушшинче кĕпере аран-аран юсанă, ун çине йывăçпа витнĕ. Çакăн хыççăн виççĕмĕш кунĕнче çĕрле нимĕçсен кĕпер патĕнче тăракан охрани çине кĕтмен çĕртен пысăк мар утрав çинчен пеме пуçланă, утрав çав вырăнтан инçех мар пулнă. Фашистсем утрав патне моторлă лодка кăларса янă, анчах ăна виçĕ граната сиенленĕ те, вăл путнă. Кĕпере хуралласа тăракан салтаксен ушкăнĕ утрав çине нимĕн йĕркесĕр пеме пуçланă. Çав утрав çинче хăмăшсем хушшинче хăюллă виçĕ партизан пытанса выртнă. Партизансем тăшмана юриех илĕртсе хăйсем çине пертернĕ. Шыв хĕрринчен кĕпер çине, вăйлăн персе тăнă вăхăтра, кĕтмен çĕртен алăпа ывăтмалли гранатăсем пырса ӳкнĕ. Германи салтакĕсемпе нимĕç салтакĕсем пĕр-пĕрин çине тăшманла пăхаççĕ. Халĕ ĕнтĕ вăрманта-и, çырмара-и е кӳлĕре-и нимĕç салтакĕн виллине тупни никама та тĕлĕнтермест. Финн халăхĕ Германи фашизмĕшĕн вăрçастăн мар. Çакна финн çарĕнчен массăллăн тухатуха тарни те лайăх кăтартса парать.

* * *

Сталин юлташ сăмахĕ ĕççыннисене çĕнĕрен те çĕнĕ паттăр ĕçсем тума хавхалантарать. Симферопольри авторемонтнăй заводри рабочисем Шуркин тата Петров хăйсен нормисене 200 процент тултараççĕ, токарь-револьверщица Рассева—150—180 процент, моторсен сборщикĕ Любецкой—250 процент тултараççĕ. Комплектовщик Костин фронта кайнă икĕ юлташĕ вырăнне ĕçлеме тăнă, вăл халĕ нормăна 300 процент тултарать. Дубинин, Киреев, Пугачева, Григорчук тата заводри ытти нумай рабочисем те кашниех икшер çыннăн ĕçлеççĕ. Симферопольри паровоз депозĕнчи токарьсем Рябой тата Болсун кулленех виçшер норма параççĕ, котельщик Степанов кунне 6 норма таран тăвать. Ленинградри предприятисенче нумай станокпа ĕçлекенсен хисепĕ хăвăрттăн ӳссе пырать. № заводăн машиностроительнăй цехĕнче ватă производственник фрезеровщик Карцев, фрезеровщиксем Мухин, Федотов, Аверьянов, Богданов икшер станокпа ĕçлеме пуçланă. Цехри фрезеровочнăй участокра пĕтĕмĕшпех нумай станокпа ĕçлеме тытăннă. Заводри нумай шлифовщиксем, токарьсем, револьверщиксем тата ытти рабочисем икĕ ытларах станокпа ĕçлеме пуçланă. Заводри рабочи Бильман отрезной пилĕк станок çинче ĕçлет. Сталин юлташ сăмахне ответлесе, Высокогорскри тимĕр-тăмăр рудникĕнчи (Свердловск облаçĕ) пур участоксенчи горняксем те стахановла вахтăна тăнă. Под'емниксен машинисчĕсем Котов, Пылаев тата Андрианов юлташсем сменăра под'емсен хисепĕ тĕлĕпше рудникшăн рекордлă çитĕнӳ тунă. Уралти предприятисене пенси илсе пурăнакан ватă кадровиксем каялла ĕçлеме пыраççĕ. Тагилри металлурги заводне Дружинин юлташ тавăрăннă, вăл домна патĕнче 45 çул хушши ĕçленĕ пулнă. Вăл Хĕрлĕ Çар ретне кайнă ывăлĕ вырăнĕнче ĕçлемелле.

Вăрçă вăхăтĕнче ютçĕршывсемпе тата хамăр çĕршывра почтăпа телеграф урлă корреспонденци çӳретмелли йĕрке çинчен ПĔЛТЕРНИ

Вăрçă пирки çĕршывра пулса тăнă обстановкăна пула, почтăпа телеграф урлă çырусем çӳретнипе государство вăрттăнлăхĕпе вăрçă вăрттăнлăхĕ тата пĕлтерӳсем çинчен тăшман пĕлмелле мар тăвас шутпа,—государство вăрттăнлăхĕпе вăрçă вăрттăнлăхĕ тата пĕлтерӳсем çинчен каласа пани государство интересĕсене сиен кӳме пултараççĕ,—Сыхăну Халăх Комиссариачĕ вăрçă вăхăтĕнче ютçĕршывсемпе тата хамăр çĕршывра почтăпа телеграф урлă корреспонденци çӳретес тĕлĕшпе çакăн пек йĕрке тунă:

1. Çырусемпе телеграммăсенче вăрçă, экономика тата политикăллă ĕçсем çинчен калакан кирек-мĕнле сведенисене те пĕлтерме чараççĕ, вĕсем çинчен пĕлтерни государствăна сиен кӳме пултарать.

2. Пур почта учрежденийĕсене те тĕрлĕрен объектсене ӳкернĕ е фотографисем çыпăçтарнă открыткăсене, сукăрсене вуламалли шрифтпа çырнă çырусене, кроссвордсемлĕ, шахмат задачисемлĕ тата çавăн евĕрлĕ ытти çырусене йышăнма та, палăртнă вырăнсене яма та чараççĕ.

3. Конвертсем ăшне подкладкăсем хума чараççĕ.

4. Почта урлă ютçĕршывсене ямалли çырусене пурне те çыру хуçин почта отделенине хăйĕн пырса памалла. Çавăн пек çырусем çине маркăсене почта работникĕсем хăйсем çыпăçтараççĕ.

5. Çакăн пек тăвас: çырусем почта хучĕн тăватă страницисенчен пысăк пулмалла мар.

Тылри пĕтĕм ĕçе вăрçă вăхăтĕнчи пек, çĕнĕ йĕркепе туса пырар!

☆ ★ ☆

Пĕтĕм халăх тăван çĕршыва сыхлама çĕкленсе тăчĕ

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ июлĕн 3-мĕшĕнче радио тăрăх тухса каланă сăмаха район центрĕнчи рабочисемпе служащисем тата «Большевик» колхоз колхозникĕсем, килхуçи хĕрарăмĕсем урамри громкоговоритель умне пухăнса тăрса итлерĕç. Çулпуç сăмахне çавăн пекех тата Урмаелĕнче, Эткерте, Çĕнĕ Мăрата, Кулĕрринче, Нĕркечре т. ыт. ялсенче те коллективлăн итленĕ.

Шмидт ячĕпе тăракан колхоз членĕсем, Сталин юлташ сăмахне итленĕ хыççăн, колхоз производствинче нихăçанхинчен те пысăк тухăçлăхпа ĕçлеме пуçларĕç. Колхоз 1941 çулшăн государствăна аш-какай парса татрĕ, 1942 çулшăн 3 центнер пачĕ. Сĕт-çу тăратмалли çурçул планне 114 проц., çăмарта памалли плана 119 проц. тултарчĕ, июлĕн 3-мĕшĕнче 1941 çулшăн государствăна 84 центнер тырă пачĕ.

Район центрĕнче ĕççыннисен хăватлă митингĕ пулчĕ. Митинга СССР Верховный Совечĕн депутачĕ О. Т. Харитонова юлташ уçрĕ. ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Бочков юлташ Сталин юлташ радио тăрăх тухса каланă сăмахăн текстне вуласа пачĕ. Вăл митинг участникĕсене тата Комсомольски районри мĕнпур ĕççыннисене çулпуç Сталин юлташ кăтартса панисене ĕçре пурнăçа кĕртме, Ленин — Сталин партийĕн тавра нихăçанхинчен те çирĕп пĕтĕçме, пурне те фронт интересĕсене тата фашизма çĕмĕрсе тăкас задачăсене пăхăнтарма, производствăра ĕç тухăçлăхне темиçе хут ӳстерме, государство умĕнчи обязательствăсене срокчен пурнăçа кĕртме, революциллĕ сыхлăха вăйлатма чĕнчĕ.

Митингра тухса каланă Аверьянов (районри военком) тата прокурор Иженеев юлташсем Германи фашизмне хирĕç геройла çапăçакан пирĕн паттăр боецсемпе летчик-соколсене саламларĕç, тылра хамăра-хамăр шеллемесĕр ĕçлесе, пирĕн Хĕрлĕ Çара фронтра çĕнтерӳ тума пулăшма чĕнчĕç.

— Тăшман вăрçăн малтанхи кунĕсенче тунă хăшпĕр çитĕнӳсем вăл пире çĕнтересснине пĕлтермест,—тет граждан вăрçин участникĕ коммунист Разумов юлташ. — Пирĕн геройла Хĕрлĕ Çар тăшман çарĕн чи лайăх дивизийĕсене çĕмĕрсе тăкрĕ. Хĕрлĕ Çарăн тĕп вăйĕсем çапăçăва кĕрсен Гитлер Совет халăхĕн иксĕлми вăйне часах туйса илĕ. Совет халăхĕ нихăçан та фашизм чури пулас çук. Пĕтĕм вăя тăшмана çĕмĕрсе тăкнă çĕре хурар! Хĕрлĕ Çара мĕн май пур таранах пулăшар!

МТС директорĕн политика енĕпе ĕçлекен помощникĕ Козлов юлташ митингра çапла каларĕ:

— Манăн пĕр ывăл фронтра фашистсене хирĕç çапăçать, иккĕмĕш ывăлăма та çак кунсенчех çара ăсататăп. Эпĕ граждан вăрçинче виçĕ çул хушши çапăçрăмăр, çак телейлĕ пурнăçа юнлă çапăçусенче кĕрешсе илнĕ. Нимĕç фашисчĕсем ирĕклĕ совет халăхне тепĕр хут чура туса хурасшăн, Совет Союзĕнче капиталистсемпе помещиксен власçĕ тăвасшăн. Нихăçан та пурнăçа кĕме пултарайман ĕмĕт! Сталин юлташ пĕтĕм Совет халăхне хамăрăн тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕшĕн, чыслăхĕшĕн юлашки юн тумламĕ юлмиччен çапăçма чĕнчĕ. Пĕтĕм çĕршыв тăван çĕршыва хӳтлеме çĕкленсе тăчĕ. Эпир çĕнтеретпĕрех! Фашизма тĕп тăватпăр!

Юлашкинчен митинг резолюци йышăнчĕ. Комсомольски районри ĕççыннисем хăйсен пĕтĕм ĕçне халех вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек урăхлатса çĕнетме, пурне те фронт интересĕсене тата тăшмана çĕмĕрсе тăкас задачăсене пăхăнтарма пулса, Хĕрлĕ Çар валли мĕн кирлине йăлтах туса пама пулса аслă çулпуçа Сталин юлташа сăмах пачĕç.

М. ЯКОВЛЕВ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Сталин юлташ радио тăрăх сăмах тухса каланă ятпа Нерядово ялĕнче (Сĕнтĕрвăрри р.) пулнă митинг.

Г. КОСТИН фото-ӳкерчĕкĕ.

Шупашкар хулинчи интеллигенци пухăвĕ

Июлĕн 6-мĕшĕнче, Шупашкар хулинчи интеллигенцин пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ Ахазов юлташ хальхи вăхăт çинчен доклад туса пачĕ.

Пĕтĕм Совет халăхĕ халĕ пĕр ĕмĕтпе — асса кайнă фашистла ирсĕрсене çĕмĕрсе тăкас ĕмĕтпе пурăнать.

Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ радио тăрăх тухса каланине пĕтĕм çĕршыв итлерĕ. Сталин юлташ сăмахĕ тăшмана çĕнтермелли боевой программа пулса тăчĕ.

Совет халăхĕ, мухтавлă Хĕрлĕ Çар тата Тинĕс-Çар Флочĕ фашистла Германин çарĕсене хыттăнах, ним юлмичен аркатса пĕтермеллех çапса çĕмĕресçĕ. Тăшманăн чи лайăх дивизийĕсене халĕ пĕтĕмпех çĕмĕрсе тăкнă.

Пирĕн çĕршывра çĕршер, темиçе пиннĕ çын Хĕрлĕ Çар ретне илме пытса заявленисем параççĕ. Вĕсем тăван çĕршывăн, ирĕклĕхĕшĕн юлашки юн тумламĕ юлмиччен кĕрешме пулаççĕ.

— Ман вăй тата пĕлӳ ăçта кирлĕ, эпĕ çавăнта кайма хатĕр, — тесе пĕлтерет РСФСР тава тивĕçлĕ учительници Черпакова юлташ.

Шупашкар хулинчи врачсем хăйсене мобилизацилеммĕ, тесе шутлаççĕ. Чăвашсен ялхуçалăх институтĕнчи доцентсем, наука кандидачĕсем стройтехникумри работниксем, учительсем колхозсене пулăшма тухса кайма хатĕр.

Докладчик юлашкинчен хулари интеллигенцине Ленин—Сталин партийĕ тавра тата тачăрах пĕтĕçме, Сталин юлташ хушнă пек ĕçлеме чĕнсе каларĕ.

РСФСР тава тивĕçлĕ артисчĕ Алексеев юлташ çапла калать:

— Юнлă Гитлерăн çарĕсем социализмлă тăван çĕршыв çине вăрçăпа килсе тапăнчĕç. Тăшмана хирĕç кĕрешме пĕтĕм халăх çĕкленчĕ. Пирĕн танкистсем, летчиксем, артиллеристсем, пехотинецсем, моряксем тăшмана хирĕç паттăрăн кĕрешеççĕ, ăна çĕмĕреççĕ.

Эпир хамăрăн хĕçпăшала — искусствăна вăрçă пынă вăхăтра та усă курма пултаратпăр. Ситес кунсенчех Академи театрĕ республикăри районсем тăрăх тухса каять. Театр работникĕсем халĕ хăйсене мобилизацилеммĕ, тесе шутлаççĕ.

Врач Васильева юлташ çапла каларĕ:

— Хальхи хăрушă вăхăтра врач, слесарь, колхозник хăйсен хисеплĕ ĕçĕсемпе тыла çирĕплетеççĕ. Медицина учрежденийĕсенчи мĕнпур работниксем: профессорсем, врачсем, сестрасем, санитаркăсем Хĕрлĕ Çара пулăшма, тăшмана йăлтах çĕмĕрсе тăкма хатĕр тăраççĕ. Шупашкар хулинчи медицина работникĕсем хăйсен мĕнпур вăйĕсене, пултарулăхĕсене мобилизацилеççĕ.

Врач Миролюбова юлташ санитаркăсене тата технически работниксене вĕрентсе çитернĕ. Чăваш АССР тава тивĕçлĕ врачĕ Шульпенкова, врач Долженко юлташсем ПВХО кружокĕсене ертсе пыраççĕ. Эпир халĕ, — терĕ Васильева юлашкинчен, — фронта каякан кашни врач вырăнне йышăнма хатĕр.

— Фашистла çĕлен-калтасем, — тет хăйĕн сăмахĕнче ялхуçалăх институчĕн доценчĕ Тураев юлташ, — пирĕн халăха нимĕç баронĕсемпе князĕсен чурисем туса хурасшăн. Анчах фашистла бандитсем йăнăлпрĕç. Эпир шантарса калатпăр: пирĕн халăх, Ленин—Сталин партийĕ тавра нихăçанхи пек мар таччăн пĕтĕçнĕскер, тăшмана йăлтах çапса аркатса тăкĕ. Эпир, ялхуçалăх институтĕнчи профессорсемпе преподавательсем, хамăра мобилизацилеммĕ, тесе шутлатпăр. Эпир колхозсене ăнса пулакан тырпула уйрăм ăнăçлăн пуçтарса кĕртнĕ çĕрте пулăшма яланах хатĕр.

Ача сачĕн заведующийĕ Никулина, иккĕмĕш номерлĕ шкулти преподаватель Богатырева, биологи наукин кандидачĕ Плетнев, Тукташ юлташсем тухса сăмах каларĕç.

Шупашкар хулинчи интеллигенци пухăвĕ пĕр шухăшлă пулса, хамăрăн тăван çĕршыва сыхлама, пулăшма яланах хатĕр пулнине кăтартса резолюци йышăнчĕ.

Çулпуç чĕнсе калана хыççăн

ВĂРНАР. (Телефон тăрăх). Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ радио тăрăх сăмах тухса каланă ятпа июлĕн 4-мĕшĕнче, Вăрнар поселокĕнчи рабочисен, служащисен тата килхуçи хĕрарăмĕсен пысăк митингĕ пулса иртрĕ.

Сталин юлташ радио тăрăх каланă историллĕ сăмах çинчен ВКП(б) райкомĕн секретарĕ С. Сергеев юлташ каласа панă.

Юнлă фашистсен банди пирĕн социализмлă тăван çĕршыв çине вăрăхурахла тапăнчĕ. Совет çĕршывĕ хăрушлăх умĕнче тăрать. Тăшмана çапса çĕмĕрес ĕçе Сталин юлташ совет халăхĕн пĕтĕм вăйĕсене хума чĕнет. Сталин юлташ чĕннине ответлесе, кашни предприятие, колхоза, кашни çурта оборона крепоçĕ туса хурар, кашни çын алла хĕçпăшал тытса тăшмана çапса аркатма хатĕр тăмалла, — тет Сергеев юлташ.

Чугунçул станцин начальникĕ И. Сидоров юлташ хăйĕн сăмахĕнче çапла каларĕ:

— Чугунçул транспорчĕ — Хĕрлĕ Çарăн тăван пиччĕшĕ. Чугунçул транспорчĕ тăван çĕршывăн оборона хăватне тĕреклетес, фашистла тăшмансене çапса çĕмĕрес ĕçре питĕ пысăк вырăнта тăрать. Вăрнар станцинчи железнодорожниксем чугунçула тĕрĕстĕкел ĕçлеттерессишĕн мĕнпур вăя хураççĕ. Сталин юлташ совет халăхне чĕнсе калани кашни çынна хăйĕн вырăнĕнче дисциплинăллă, сыхă пулма хушать. Эпир, железнодорожниксем, Сталин юлташ хушнине пурнăçа кĕртме хамăрăн мĕнпур вăя, кирлĕ пулсан, пурнăçа та паратпăр.

Малалла вăл ĕççыннисене чугунçул транспортне пулăшма чĕнет.

Наукăсен кандидачĕ Афанасьев юлташ акнă тырпулсене пăхса усрасси, вĕсене уйхиртен пухса кĕме хатĕрленесси, çак ĕçре специалистсен ролĕ пысăкки çинчен калать.

— Совет халăхĕ большевиксен партийĕ тавра, аслă Сталин тавра нихăçанхинчен тачă пĕтĕçсе тăрать. Çак халăха çĕнтерекен вăй тĕнчере пулман, пулас та çук.

Ĕççыннисем Сталин юлташ чĕнни çине ĕçпе ответлеççĕ. Зеленовкăри тата Кольцовкăри колхозниксем чугунçул транспортне куллен пулăшма 50 çын уйăрнă. Киров ячĕпе тăракан колхоз 80 центнер, «Первое мая» колхоз 35 лав тырă «Заготзерно» складне леçсе пачĕç. Халĕ «Заготзерно» складне кунĕн-çĕрĕн тырă илсе пыраççĕ. Государствăна тырă парасси Сталин юлташ радио тăрăх тухса каланă хыççăн пушшех вăйланчĕ.

Чкалов ячĕпе тăракан колхоз июлĕн 4-мĕшĕнче утă çулма тухрĕ. Утă çулма тухнă малтанхи кунах В. Ефимов, Ф. Иванов тата М. Михайлов юлташсем нормăна 120—130 процент тултарса ĕçлеççĕ.

— Колхоз уйхирĕсенчи ударлă ĕç тăшмана çĕнтерме пулăшать. Сталин юлташ пире кашнине хăйĕн вырăнĕнче тӳрĕ ĕçлеме хушнине эпир, колхозниксем, пĕр сăмахсăр пурнăçлатпăр, — теççĕ, вĕсем.

Комсомолецсем государство предприятисене, колхозăн амбарĕсене, фермисене сыхлассине хăйсем çине илеççĕ.

В. ЦЫПЛЕНКОВ.

Хĕрарăмсем тракторсемпе автомашинăсем çинче ĕçлеме тытăнаççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Машинно-тракторнăй станцисенче ĕçлекенсенчен чылайăшĕсем тăшмана хирĕç çапăçма кайрĕç. Анчах ĕç чарăнса тăмасть. Фронта кайнисен вырăнĕсенче ĕçлеме хĕрарăмсем тăраççĕ.

МТС директор кабинетне тулли питлĕ вăтам пӳллĕ хĕрарăм кĕчĕ. Вăл 9-мĕш тракторнăй бригада бригадирĕн Чуркин юлташăн арăмĕ Варвара.

— Ман упăшка та фронта кайма пултарать. Эпĕ ун вырăнĕнче—трактористка пулса ĕçлесшĕн.

Районра ĕлĕкрех трактористка пулса ĕçленĕ хĕрарăмсем 9 тата тракторнăй курс пĕтернĕ хыççăн тĕрлĕ çăлтавсем пулнă пирки ĕçлеме кайманнисем 5 хĕрарăм пур. Халĕ вĕсем те трактор çине ларма кăмăл тăваççĕ. Вĕсемпе çитес кунсенчех кĕске сроклă курс организацилеççĕ.

Кунсăр пуçне тата районра хĕрарăм-трактористкăсем вĕрентсе хатĕрлес тĕллĕпте курс уçăлать, унта 25 çын вĕренмелле.

Тракторпа, комбайнпа ĕçлеме вĕренес текенсем районра татах та чылай. Тракторнăй курсран вĕренсе тухнă хыççăн хăшпĕрисем кăштах ĕçленĕ те урăх ĕçе куçнă. Халĕ вĕсем трактор çине тепĕр хут лараççĕ. Паянхи кунра ун пеккисем 16 çын. МТС завхозĕ Д. Куманьков юлташăн нимĕнле специальность та çук. Вăл комбайнпа ĕçлеме вĕренме кăмăл турĕ.

Халичен машинно-тракторнăй станцине трактористсем пулса 8 хĕрарăм ĕçленĕ. Вĕсем хăйсен ĕç нормисене иртерсе тултараççĕ, ĕç тухăçлăхне ӳстерсе пыраççĕ. Пелагея Варфоломеева юлташ хăйĕн планне иртерсе тултарнипе пĕрлех, горючине перекетлет.

Механизацилеммĕ вăрман пунктĕнче те Хĕрлĕ Çара кайнă трактористсемпе шоферсем вырăнĕнче ĕçлеме хĕрарăмсем тăраççĕ. Телефонистка Опина, вăрман складĕнчи ученица-счетовод Соловьева т. ыт. юлташсем хăйсене тракторсемпе ĕçлеме вĕрентме пытнă. Дирекци вĕсен пытăвне пурнăçланă, 8 хĕрарăма тракторнăй курсра вĕренме Улатăра янă.

Мехлосопунктри физкультура инструкторĕ Яровая тата телефонистка Коновалова юлташсем шофера вĕренме кăмăл турĕç.

— Урса кайнă вăрă-хурахсем телейлĕ çĕршыв çине килсе тапăнчĕç. Вĕсене çирĕп отпор памалла, ăна пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар ăнăçлăн пурнăçлĕ. Халĕ арçынсем фронта каяççĕ. Пирĕн хĕрарăмсен, вĕсен вырăнне тăрса, ĕçе пĕр вăрахлатмасăр ĕçлемелле. Эпир автомашинăпа çӳреме вĕренесшĕн. Ытти хĕрарăмсене те тракторсем, автомашинăсем, комбайнсем çинче ĕçлеме вĕренме чĕнетпĕр,—теççĕ вĕсем.

Ситес кунсенче механизацилеммĕ тракторнăй курс ĕçлеме пуçлать. Унта пуринчен ытла вăрманта ĕçлекенсен арăмĕсем, хĕрĕсем вĕренмелле.

Тракторсем, комбайнсем пĕр чарăнмасăр ĕçлĕç

ШАХАСАН. Хыçалкасри «Трактор» колхозра, фронта тухса кайнă И. Петров вырăнне Мария Матвеева конюхра ĕçлеме пуçларĕ.

— Вăрçă вăхăтĕнче кирек мĕнле ĕç те çĕнтерӳшĕн усăллă. Çĕнтерĕве фронт кăна мар, тылри ĕçсем те татса параççĕ. Арçынсем фронта кайнишĕн эпир алăсене усса лармăпăр, арçынсем вырăнне тăрса çĕнтерӳсем тăвăпăр. Çакă ĕнтĕ ирсĕр фашистсене тивĕçлĕ отпор пани пулĕ, — тет вăл. Матвеева юлташ колхоз лашисене юратса пăхать, вĕсене ситĕлĕклĕ тăрантарать, вăхăтра шăварать, тасатса йĕркелет. Çав колхозрах тата Е. Максимова колхозница, фронта кайнă арçынсем вырăнне тăрса, çĕрле колхоз амбарĕсене сыхлать, кăнтăрла чăх-чĕп ферминче ĕçлет.

Хĕрарăмсем колхозра пур ĕççене те хутшăнаççĕ. «Красный луч» колхозра Н. Дмитриевăпа А. Филиппова колхозницăсем, «Ударник» колхозри Мелания Григорьева, Малти Антавăшри колхозра Ульяна Власова юлташсем Хĕрлĕ Çар ретне кайнă бригадирсем вырăнне ĕçлеме пуçларĕç. «Комсомол» колхозра Анастасия Павлова — кладовщик, Чапаев ячĕпе тăракан колхозра Екатерина Павлова — колхоз председателĕ, «Чуваш. ЦИК» колхозра Татьяна Васильева — учетчик, «Красный Октябрь» колхозра Мария Егорова — секретарь пулса ĕçлеме тытăнчĕç. Вĕсем хăйсен ĕçĕнче малтанхи кунсенчех паха тĕслĕхсем кăтартрĕç. Сăмахран, Екатерина Павлова председатель пулса ĕçлекен колхоз государство умĕнчи обязательствăсене 100 проценчĕпех пурнăçланă. Колхоз утă пухса кĕме тата уборкăна пур енчен те хатĕрленсе çитнĕ.

Июлĕн 1-мĕшĕнче Шăхасанти машинно-тракторнăй станцинче трактор ĕçне вĕреннĕ хĕрарăмсемпе районри трактористсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Районра трактор ĕçне вĕреннĕ хĕрарăмсем нумай, анчах та вĕсенчен чылайăшĕ юлашки çулсенче тракторпа ĕçлемен пулнă. Халĕ вĕсем, фашистла вăрă-хурахсене ответлесе, хăйсене каллех трактор çине лартма ыйтаççĕ.

Варвара Васильева комбайнерка хăйĕн комбайнне тепĕр хут тĕрĕслесе тухрĕ.

— Манăн комбайн тахçантанпах уборкăна хатĕр, — тет вăл, — эпĕ ăна тĕрĕслесех тăратăп, хăшпĕр вырăнсем тутăхман-и унта, е гайкăсем пушаннă пулĕ, вĕсем ĕçре пысăк чăрмавсем кӳме пултараççĕ. Иртнĕ уборкăра ман комбайн лайăх ĕçлерĕ. Норма тăрăх 260 гектар вырмалла пулсан, эпĕ хаман комбайнпа 327 процент тултартăм. Георгий Алексеев тракторист та аван ĕçлерĕ. Вăл кăçалхи сезонра та 400 гектартан кая мар вырса илме сăмах парать.

Комбайн лайăх ĕçлетĕр тесен, ăна лайăх пăхса, çителĕклĕ çу сĕрсе тăмалла.

Çаксемпе пĕрлех, чи кирли вăл — комбайнсемпе ĕçлемелли уйсене тĕплĕн вĕренмелле, комбайнсене пĕр участоктан тепĕр участока куçарма йĕркеллĕ тата çирĕп план-график тумалла. Кăна тунă чухне тырăсем хăш участокра мĕн вăхăтра пиçсе çитме пултарнине те шута илмелле. Пуринчен ытларах, çĕрле ĕçлемелли участоксене лайăхрах сӳлласа илмелле, вырăнсемпе тĕплĕн паллашмалла. Комбайнпа çĕрле ĕçлени уборкăна кĕске срокра иртерес ĕçре пит пысăк пулăшу парать. Каçхине сывлăм ӳкмест е сахал ӳкет пулсан, вăл комбайна ĕçлеме ним чухлĕ те чăрмантармасть. Çĕрле ĕçлеме çутă кăна кирлĕ, ăна МТС тупса пама пултарать.

Совет хĕрарăмĕсен активлăхĕ калама çук пысăк. Фашистла вăрă-хурахсене ответлесе, вĕсем хăйсен ĕçĕсене пысăк çĕкленӳпе тӳса пыраççĕ. Пĕр трактор та ахаль лармĕ. Тылпа фронт уйăрлми çыхăнса тăшмана тĕппипех аркатĕç. Çĕнтерӳ пирĕнтех пулать!

С. СТЕПАНОВ.

Вагонсем юсакан заводра

КАНАШ. Иртнĕ çулсенче вагонсем юсакан завод пĕр тикĕс ĕçлесе пырайманччĕ. Уйăх е квартал пуçламĕпенче яланах начартарах ĕçлетчĕ. Кун хыççăн штурмовщина пуçарса ярса, уйăх е квартал вĕçĕнче плана тултаратчĕç.

ВКП(б) XVIII конференцийĕн решенийĕсем çак çитменлĕхсене тĕпренех пĕтерме пулăшрĕç. Кашни кун график тăрăх ĕçлеççĕ. График заводăн кашни кунхи ĕçне уççăн кăтартса парать.

Инженерно-технически работниксемпе мастерсем производство ĕçне лайăх ертсе пыраççĕ. Техник Андреев юлташ малтанхи вăхăтра завод управленийĕн аппаратĕнче ĕçленĕ. Халĕ вăл вагон тăвакан цехри мастер. Инженерсемпе техниксенчен чылайăшĕ производствăра ĕçлеме куçрĕç. Çаксем ĕнтĕ, паллах, ĕçе лайăхлатма нумай пулăшрĕç. Цехсене тата цехсенчи станоксене таса тытса тăраççĕ. Цехсен стенисене шуратса илемлетнĕ. Завод территорийĕнче пур çĕрте те йывăççем лартса тухнă.

Германи фашисчĕсем пирĕн çĕршыв çине сĕмсĕррĕн тапăнни рабочисене хытă тарăхтарса ячĕ. Рабочисем фашистсене хирĕç ĕç тухăçлăхне темиçе хут ӳстернипе ответлеççĕ. Уйăм цехсем нормăна пĕрре çурă е ытларах тултараççĕ. Ефимов тата комсомолец Чернухин юлташсем ертсе пыракан цехсем хăйсен нормине 160 процент тултараççĕ.

Тимĕрçĕ цехĕнчи тимĕрçĕ сталинла призыври ударник Фомин тата молотобоец Матросов юлташсем июнĕн 24-мĕшĕнчен пуçласа нормăна 300-330 процентран кая мар тултарса ĕçлеççĕ. Тимĕрçĕ Миронов тата молотобоец Савельев юлташсем те вĕсенчен юлмаççĕ.

Рабочисем ĕç тухăçлăхне ӳстереççĕ, тăшмана хăвăртрах пĕтерме Хĕрлĕ Çара пулăшаççĕ. Чылай рабочисем Хĕрлĕ Çар ретне яма ыйтса заявленисем параççĕ. Рабочисен арăмĕсемпе килхуçи хĕрарăмĕсем фронта кайнисем вырăнне тăма хатĕрленеççĕ. Халĕ кунта хĕрарăмсене заводри профессисене вĕрентес тĕллĕпте курссем ĕçлеме пуçланă.

В. СОКОЛОВ.

Тăван çĕршывăн патриочĕсем

СĔНТĔРВĂРРИ. Совет халăхĕн ирĕклĕ пурнăçне туртса илме, ăна пусмăрлама пăхакан ылханлă, йĕрĕнчĕк фашистсем пирĕн тăван çĕршыв çине вăрăхурахла вăрттăн çыртакан йытă пек тапăнчĕç. Пĕтĕм совет халăхĕ тăшмана хирĕç çĕкленчĕ. Паян вĕсем правительствăпа парти тавра, Сталин юлташ тавра нихăçанхинчен те вăйлă пĕтĕçнĕ. Вĕсенчен кашнинех хăйĕн вырăнĕнче тӳрĕ кăмăлпа тăрăшса ĕçлет, тăван çĕршывăн вăй-хăватне тĕреклетме, тăшмана хăвăртрах çĕмĕрсе тăкма Хĕрлĕ Çара пулăшать.

Советăн кашни гражданинĕ Германи фашисчĕсене ылханать, вĕсем тăшман тапăннине производствăра ĕç тухăçлăхне темиçе хут ӳстернипе ответлеççĕ. Тăван çĕршывăн патриочĕсем хăйсене Хĕрлĕ Çар ретне хăвăртрах илме ыйтса кашни кун вуншар, çĕршер заявленисем параççĕ.

Акă мĕн çырать Сĕнтĕрвăрри хулинчи Г. Заигин юлташ:

— Эпĕ граждан вăрçин участникĕ, халĕ 52 çулта. Мана Хĕрлĕ Çар ретне илмĕ ыйтатăп. Эпĕ, Хĕрлĕ Çар ретĕнче Германи фашисчĕсене хирĕç кĕрешекен хамăн ывăлпа—Николайпа пĕрле пуласшăн.

— Пирĕн Хĕрлĕ Çар, — тесе çырать Сĕнтĕрвăрри хулинчи С. Саначин юлташ, — яланах çĕнтернĕ. Вăл вăйлă, çирĕп пулнине пĕрре кăна мар кăтартнă. Белофинсене хирĕç кĕрешнĕ вăхăтра эпĕ Хĕрлĕ Çар ретне хам ирĕкпе кайăм. Вĕсене çĕмĕрсе тăкрăмăр. Хальхи отечественнăй аслă вăрçа та хам ирĕкпе каятăп.

— Эпир, «Красная Армия» колхоз членĕсем, пире Хĕрлĕ Çар ретне илсе, хăвăртрах фронта яма ыйтатпăр. Эпир тăван çĕршыв умĕнчи хамăрăн таса тивĕçе хисеплĕн пурнăçа кĕртме, тăшмана хирĕç хамăр пурнăçсене шеллемесĕр кĕрешме пулатпăр,—тесе çыраççĕ Г. Трутнев, Н. Базанов, Б. Матвеев юлташсем.

— Пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар,—тесе çырать медсестра Иванова юлташ,—тăван çĕршыв чыслăхĕшĕн Германи фашисчĕсене хирĕç паттăрăн кĕрешет. Эпĕ те вĕсемпе пĕрле пуласшăн, тăшмана çапса хуçма пулăшасшăн. Мана халех фронта яма ыйтатăп.

Хĕрлĕ Çар ретне хăйсен ирĕкĕпе кайма шутлакансем татах та нумай Социализмлă тăван çĕршывăп патриочĕсем хамăр çĕршыва кăкăрсемпе хӳтлеме хатĕр.

Ĕçĕн пысăк тухăçлăхĕ

ЕТĔРНЕ. Районри чылай предприятисемпе артельсем ултă уйăхри плана ăнăçлăн тултарчĕç. Сталин ячĕпе тăракан артель—173 процент, «Ударник» артель—145 процент тултарнă. Спиртзавод тата артельсем июнь уйăхĕнче татах та лайăхрах ĕçлерĕç, плансене срокчен ирттерсе тултарчĕç.

Асса кайнă фашистсем пирĕн çĕршыв çине вăрçăпа тапăннине хирĕç рабочисемпе работницăсем стахановла ĕçленипе, нихăçанхи пек мар çирĕп дисциплина пулнипе, ĕç тухăçлăхне кунран-кун ӳстерсе пынипе ответлеççĕ. Уйăм рабочисем нормăна икшер хут тата унтан та ытларах тултарса ĕçлеççĕ.

Сталин ячĕпе тăракан артельте Г. Щетинина, А. Борисова юлташсем кашни кунхи нормăна 200-шер процент, Абакумова—175 процент, Е. Маврина—150 процент, А. Недошивина—140 процент тултарса ĕçлеççĕ.

Спиртзаводри мĕнпур рабочисем техминимума вĕрентсе çитнĕ. Кунсăр пуçне стахановла шкул организацилеммĕ. Çак шкулта 32 çын вĕрентсе, экзаменсем панă.

«Ударник» артельти Я. Глазунов юлташ нормăна кунсеренех 160—170 процент тултарса пырать.

— Эпир,—теççĕ рабочисемпе артель членĕсем,—Германи фашисчĕсен ирсĕр ĕçĕсене хамăр вырăнта тӳрĕ кăмăлпа, нормăсене икшер-виçшер хут тултарса ĕçленипе ответлетпĕр. Çавна май хамăрăн çĕршыва тата мухтавлă Хĕрлĕ Çара пулăшатпăр. Фашистсем пĕлсе тăччăр: пирĕн çĕршыв тата унăн никам çĕнтерейми çарĕ нихăçанхинчен те вăйлă. Халăхăн юратнă та мухтавлă Хĕрлĕ Çарĕ фашистсене вилмеллех çапса хуçĕ.

А. СТЕПАНОВ.

ВКП(б) Етĕрне райкомĕн секретарĕ.

Ачасем, колхоз уйхирĕсенче паттăрăн ĕçлер!

Ачасем! Фашистла Германин юн ĕçме юратакан правителĕсем пирĕн тăван çĕршыв çине тапăннине эсир пурте пĕлетĕр. Юнлă фашистсем пирĕн тăван çĕршыва, пирĕн телейлĕ те савăнăçлă пурнăçа пĕтересшĕн. Анчах та тискер фашистсен ĕмĕчĕ нихăçан та пурнăçа кĕрес çук. Пирĕн мухтавлă Совет халăхĕ тăшмана çапса аркатма хатĕр тăрать.

Пирĕн аттесем тата пиччесем фронта каяççĕ. Вĕсем унта алла хĕçпăшал тытса тăван çĕршыва сыхласа хăварассишĕн фашистла вăрă-хурахсене хирĕç çапăçаççĕ. Эпир пурте хамăрăн халăха, хамăрăн Хĕрлĕ Çара тăшмана çĕнтерме пулăшма пултаратпăр, пулăшма тивĕçлĕ те. Çавăнпа та пирĕн пурин те хамăр колхозсен уйхирĕсенче пĕтĕм вăй-хала хурса ĕçлемелле. Колхозниксемпе колхозницăсене тырпула уйхирĕсенче пухса кĕртме хатĕрленес, акнă тырпулсене лайăх пăхса ӳстерес, колхозсенче выльăх-чĕрлĕхсене пăхса усрас ĕçре куллен пулăшăр! Эпир, ачасем, нумайăн. Эпир кашни колхозра пысăк ĕç тума пултаратпăр.

Кувакинăри вăтам шкулти 7-мĕш класри ученик Алеша Абрамушкин испытание ăнăçлă тытнă хыççăн, колхоз производствинче активлăн хутшăнса ĕçлет. Вăл халĕ пирĕн «Пролетарий» колхозра плугарь пулса ĕçлет. Тракторист та, колхоз правленийĕ те унăн ĕçĕпе кăмăллă. Миша Фролов тата Ваня Кузин та чылай ĕçкунĕ тунă. Пирĕн ачасем пахча-çимĕçсем лартнă, çум çумланă çĕрте тăрăшса ĕçлеççĕ.

Эпир мĕнпур пионерсене, комсомолецсене пирĕн пример тăрăх ĕçлеме чĕнетпĕр. Ачасем, колхоз уйхирĕсенче, колхоз фермисенче большевикла ĕçлер! Тăшмана—фашизма çĕр çинчен шăлса ывăтма Хĕрлĕ Çара пулăшар!

А. АБРАМУШКИН, В. СЕМИЧЕВ, М. ФРОЛОВ, В. МАЛЫШЕВ, ТЕРЮКАЛОВ.

(«Колхозная правда» хаçат).

Тăрăшса ĕçлеççĕ

КАЛИНИНО. Шуркассинчи «Социализм» колхоз членĕсем пирĕн телейлĕ тăван çĕршыв çине вăрçăпа килнĕ фашистла Германин тискер кайăкĕсене тарăхса ылханаççĕ. Урнă тăшмансене çапса çĕмĕрме колхозниксемпе колхозницăсем паттăр Хĕрлĕ Çара ĕç тухăçлăхне ӳстернипе пулăшса пыраççĕ.

Колхоз хуралçи—граждан вăрçин участникĕ Абрам Прокопьев общественнăй пурлăха вут-кăвартан тата вăрă-хурахран тимлĕн сыхлама тăрăшать.

Конюхсем лашасене лайăх пăхас тĕллĕпте пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Уйрăмăнах 1-мĕш бригадăн старший конюхĕ И. Сабиканов юлташ Хĕрлĕ Çар валли лайăх лашасем ӳстересшĕн тăрăшать.

Ытти колхозниксем те производствăра тăрăшса ĕçлеççĕ.

Колхоз государствăна 1941 çулшăн 200 центнер тĕштырă пачĕ. Колхозниксем те государство умĕнчи парăмсене вăхăтра тӳлесе пыраççĕ.

А. ВАСИЛЬЕВ.

Пурне те фронт интересĕсене тата тăшмана çĕмĕрсе тăкас задачăсене пăхăнтармалла!

☆ ★ ☆

Кашни çурт—оборона крепоçĕ

Пирĕн тăван çĕршыври ĕççыннисем Германин урнă йыттисене çĕмĕрсе тăкас ĕçре фронта пур майсемпе те пулăшса пыраççĕ. Çавăнпа пĕрлех вĕсем çар ĕçне тимлĕн вĕренсе тыла çирĕплетсе пыраççĕ.

Хаяр тăшмана çапса аркатма фронтпа пĕрлех тыл та çирĕп пулни кирлĕ. СССР Совнаркомĕ кăçал июлĕн 2-мĕшĕнче «Сывлăшран килсе тапăннинчен сыхланма пурне те обязательнăй йĕркепе вĕрентесси çинчен» уйрăм постановлени йышăнчĕ. Çак постановление Шупашкарти ĕççыннисем пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç.

Чăвашпотребсоюзра ĕçлекен работниксем хăйсен учрежденинче самозащита групписене организациленĕ. Хăйсен ирĕкĕпе çырăннă работниксенчен химиллĕ тапăнуран, вут-кăвартан сыхланакан, санитарнăй тата çĕмĕрсе тăкнă сооружениссене юсакан группăсем туна. Кашни группа çумнех пĕр связист çирĕплетнĕ.

Тактикăллă занятисем ирттерме группăсенче инвентарьсемпе оборудованисем çителĕклĕ.

Чăвашдревпромсоюзпа Чăваштарпромсоюз тата «Спартак» обществинче ĕçлекенсем «Готов к противовоздушной и противохимической обороне» нормисем тăрăх вĕренме пуçларĕç. Занятисене служащисемпе пĕрле килхуçи хĕрарăмĕсем те йĕркеллĕ çӳреççĕ.

Ленин ячĕпе тăракан артельре сывлăшран килсе тапăннинчен тата химиллĕ тапăнуран сыхланма вĕренме 2 группа организациленĕ. Вĕсенче 52 хĕрарăм вĕренет. Занятисем йĕркеллĕ иртеççĕ.

Хулари ĕççыннисем, пурте пĕр çын пек пулса, кашни çуртах оборона крепоçĕ туса хурассишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ.

Çирĕп тылшăн

СЕМĔРЛЕ. Фашистла бандитсем пирĕн юратнă тăван çĕршыв çине вăрăхурахла тапăнни колхозниксене пĕтĕм чĕререн тарăхтарчĕ. Колхозниксен хаяр тарăхăвĕ вĕçĕ-хĕррисĕр пысăк. Фашистла çĕлен-калтана таптаса лапчăтас ылхану пит те хăватлă.

Колхозниксен производствăллă çĕкленĕвĕ нихăçанхинчен те вăйлă. Вĕсем хăйсен вырăнĕсенче тимлĕн, тăрăшса ĕçлеççĕ.

Тыл вăл тăшманпа çапăçма хăватлă вăй хатĕрлет.

Хутарти Ленин ячĕпе тăракан колхозăн выльăх-чĕрлĕх фермисем пиллĕк: ĕне, лаша, сысна, чăх-чĕп тата сурăх фермисем. Колхоз иртнĕ çулта выльăх-чĕрлĕхсенчен 60 пин тенкĕ ытла тупăш илнĕ.

Сысна ферми уйрăмах лайăх ĕçлет. Ку фермăна тăваттăмĕш çул ĕнтĕ коммунист И. Фадеев юлташ ертсе пырать. Фермăра 222 сысна. Вĕсене колхозниксем тăрăшса пăхаççĕ. Л. Викторов юлташ сысна ферминче хăйĕн пултарулăхне аванах кăтартрĕ. Вăл кунта тăваттăмĕш çул ĕçлет. Иртнĕ çулта вăл 9 сысна аминчен 119 сысна сури илнĕ. Кăçал ултă уйăх хушшинче 9 амаран 80 çăвăр илнĕ.

Пĕр уйăх каярах пĕр сысна ами 16 çăвăр тунă. Çак аман хăйĕн çăвăрĕсене ĕмĕртме чĕчĕсем ситмен. Çăвăрсем амăшĕн чĕччине ĕмесшĕн пĕр-пĕринпе туллашнă. Викторов юлташ нумай шухăшласа тăман, вăл искусственнăй сысна ами тунă. Кун çинчен вăл хаçат-журналсем çинче вуланă.

Белоруссири Оршански районри «За трудовое отличие» медаль илнĕ А. Н. Авсюкевич свинарăн ĕçне Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкинче кăтартнă пулнă. Викторов юлташ та çакăнтан пример илнĕ. Ăна вăл çапла тунă: тăрăлла тăваткăл ещĕке пĕр енчен сĕт памалли соска кĕмеллĕх шăтăксем тунă. Çав шăтăксене сĕт тултарнă кĕ ленчесем çине соска тăхăнтартса ларт са тухнă.

Çапла тунипе вăл çăвăрсене пурне те пăхса ӳстерчĕ.

Викторов юлташ кăçал Хĕрлĕ Çара каймалла. Вăл 1922 çулта çуралнă. Хĕрлĕ Çара кайма вăл хатĕр. Унăн кăкăрĕ çинче виçĕ оборона значокĕ. Пирĕн çине фашистсем вăрçăпа тапăнни пурне те тарăхтарать. Пирĕн юратнă çĕршыва фашистсем саратасшăн. Анчах Гитлер йăнăшать. Пирĕн тыл çирĕп. Эпĕ паян — колхозри стахановец, ыран — фронтра алла пăшал тытса хăватлăн çапăçма пултаракан боец, —тет Викторов юлташ.

И. Иванов, А. Мурзаева свинарсем те таврăлă сысна ферминче тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсем те ултă уйăх хушшинче 50—60-шар çăвăр илсе, пăхса ӳстереççĕ.

Колхоз 1941 çулта государствăна аш-какай памалли плана 100 процентчĕлех пурнăçланă. Унсăр пуçне колхозниксем 1942 çулшăн 8 центнер аш-какай панă. Колхоз çак иртнĕ ултă уйăх хушшинче сысна ферминчен 12388 тенкĕ тупăш илнĕ.

Ĕне ферминче пурĕ 58 пуç, çăваканнисем — 20 ĕне, ыттисем пăрусем. Таврăлă сĕт-çу фермине комсомолка Д. Николаева ертсе пырать. Фермăра ĕнесене лайăх пăхаççĕ, сĕт суса илесси те хутшăнсах пырать.

Государствăна сĕт парас плана колхоз 60 процент пурнăçланă. В. Иванова тата Е. Клементьева дояркăсем тимлĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Пăруламалли ĕнесем пурте пăрулана. Пăрусем лайăх çитĕнеççĕ.

Чăх-чĕп фермине иртнĕ кĕркунне çеç организациленĕ. Унта 472 чăх-чĕп, 228 хур. Çак кунсенче чăхсем валли, 300 чăх вырнаçмалăх, вите туса лартнă.

С. БАТЬКОВ.

Колхозниксем çирĕп тылшăн кĕрешеççĕ

КОМСОМОЛЬСКОЕ. «Двигатель революции» колхозра хальхи кунсенчи пек пысăк çĕкленӳ нихăçан та пулман. Колхозниксемпе колхозницăсем тăшмана чĕререн тарăхса ылханаççĕ. Гитлер бандисене хирĕç çапăçакан хамăрăн мухтавлă Хĕрлĕ Çара, Тинĕс-Çар Флотне, хĕрлĕ Авиацие мĕнпур вăя парса пулăшма тăрăшаççĕ. Пурте—çамрăксем те, валтисем те колхоз производствинче пысăк çĕкленӳпе ĕçлеççĕ.

Уборка—пит те ответлă ĕç. Вăл ĕç вăраха кĕтме юратмасть. Вăхăтра пуçтарса кĕтĕн—çитĕнӳ турăн, кая юлтăн—выляса ятăн. Колхозниксем çакна асра лайăх тытаççĕ. Вĕсем уборкăна хатĕрленес тĕлĕшпе паха ĕçсем тăваççĕ. Колхозăн 6 жнейка, 2 молотилка пур. Вĕсене юсаса сарайне вырнаçтарнă. Колхозниксем 4—5 кун хушшинчех çĕнĕрен пĕр витнĕ итем турĕç, икĕ витнĕ итеме юсарĕç тата урапасене юсавлипе юсавлă маррине тĕрĕслесе тухрĕç, йĕркеллĕ маррисене юсаса тирпейлерĕç. Колхозницăсем кивĕ шăналăксемпе михĕсене сапларĕç, çĕнĕрен михĕсем 600, шăналăксем 7 çĕленĕ.

Урса кайнă фашистсем пирĕн çине вăрçăпа тухнă пирки колхозра пулнă митингра илнĕ обязательствăсене колхозниксемпе колхозницăсем халĕ пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Колхоз уборкăна хатĕрленсе çитнĕ. Ăнса ӳсекен тырпулсенчи çумкурăксене çумлас ĕçе аван организациленĕ. Кĕрхи тырă тата клевер çинчи çумкурăксене иккĕмĕш хут çумланă. Çум çумлас ĕçре уйрăмăнах иккĕмĕш бригадири Ольга Ларионова, Анна Николаева, Ирина Михайлова колхозницăсем тухăçлăн ĕçлеççĕ.

Агитаторсем, колхозниксемпе колхозницăсем ĕçленĕ çĕрте пулса, вĕсене хаçатсенчи совет информаци бюровĕ пĕлтерсе пынине, партипе правительство юлашки вăхăтсенче кăларнă постановленисене вуласа, тĕплĕн ăнлантарса параççĕ. Заем уполномоченнăйсем хăйсен ĕçĕсене вăйлатрĕç, вĕсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ.

М. ЯКОВЛЕВ.

Хĕрлĕ Çар ретне мобилизациленисен çемьишĕн тимлĕн тăрăшар

Мускавра Хĕрлĕ Çар ретне мобилизациленисен çемьисене пособи парас тĕлĕшпе ĕçлекен комиссисем ĕçе тытăнчĕç. Çак ĕçе Дзержински районĕнче лайăх организациленĕ. Социально обеспечени отделĕнче пынă çынсене кăмăллăн кĕтсе илеççĕ. Хĕрлĕ Çара тата Тинĕс-Çар Флотне мобилизациленисен арăмĕсем кунта ĕçе кайма направлениссем илеççĕ. Районти совет депутачĕсем, юристсем дежурство тăрассине организациленĕ. Военнослужащисен çемьисене документсене йĕркелеме пулăшаççĕ. Свердловски районĕнче çак ĕçе активистсем, депутатсем, педагогсем хутшăнаççĕ.

Мобилизациленисен ачисене ялĕсене, садсене, пионер лагерĕсене ярасçĕ. (ТАСС).

Нихăçан пулман пысăк активлăх

Шупашкарти Ленин ячĕпе тăракан артельри работниксем çак кунсенче нихăçан пулман пысăк активлăхпа ĕçлеççĕ. Иртнĕ шăматкун артеле ответлă задани панă. Ăна васкавлăн пурнăçа кĕртмелле пулнă. Мастер Пономарева юлташ ертсе пыракан сменăри работниксем çак задание ăнăçлăн пурнăçланă.

Артель çурçур планне 102 процент ытла тултарнă. Халĕ ĕç тухăçлăхĕ ӳссех пырать. Закройщицăсенчен Мар ковăпа Раева юлташсем кулленхи нормăна пĕрре çурă, çĕвĕ çĕлекен Хрисанова 130 процент, Архипова 125 процент тултарса ĕçлеççĕ.

Халăхсен çулӳçĕ юратнă Сталин юлташ июлĕн 3-мĕшĕнче радио тăрăх каланă сăмаха кунти работниксем ушкăнпа пухăнса итленĕ. Сталин юлташ чĕнсе каланине татах та тухăçлă ĕçленипе, ĕç тухăçлăхне ӳстернипе ответлеме пулнă.

Т. МАЙОРОВ.

«Мы зальем сталью фашистские глотки» (Макар Мазай Советсен VIII съездĕнче каланă сăмах).

Ф. А. Модоров художник картини.

Хастарлă ĕçлеççĕ

КАНАШ, июлĕн 3-мĕш. (Телефон тăрăх). Çак кунсенче, тăван çĕршыври пĕтĕм халăх Гитлера, ухмаха ернă каппайчăк бандитсене хирĕç çĕнтерӳллĕ отечественнăй вăрçă туса пынă вăхăтра, районри мĕнпур колхозсенче производствăллă пысăк çĕкленӳ палăрать. Кашни колхозник, паян ĕнерхинчен тухăçлăрах ĕçлесе, Хĕрлĕ Çăран тылне малалла татах та çирĕплетме тăрăшать.

Катекри Киров ячĕпе тăракан колхозра (председатель Корытников юлташ) çум çумлама кулленех 300 çынна яхăн тухать. Вĕсенчен çурри ытла—ватă колхозниксемпе шкул ачисем. Çапла вара, колхозра июлĕн 2-мĕш тĕлне çурхи культурăсене пурĕ 200 гектар ытла çумланă. Хĕрлĕ Çара фронтра çĕнтерӳ тума пулăшас шутпа, çак кунсенче государствăна 200 центнер ыраш панă. Сĕт-çу, çăм памалли плансене пĕтĕмĕшпех тултарнă III кварталлăн аш-какай тата çăмарта панă. 6000 тенкĕ заем укçи пухнă. Çак колхозрах икĕ бригадир тата завхоз фронта тухса кайнă. Вĕсен вырăнне ватă колхозник Егор Максимов, Сергей Егоров тата колхозница Евдокия Никифорова йышăннă.

Мăкăр ялсоветĕнчи «Канаш», «Хавас» тата Максим Горький ячĕпе тăракан колхозсенче те пысăк çĕкленӳпе ĕçлеççĕ. «Канаш» колхозра çак кунсенче пысăк пĕве тума тытăннă. Пĕве тарăнăшĕ 6 метр, сарлакăшĕ 40 метр, тăршшĕ 200 метр ытла пулать. Пĕве тунă çĕрте кулленех 70—80 колхозник ĕçлет. Уйрăмах хĕрарăмсемпе шкул ачисем лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. 65 çулти Евдокия Александрова, Зоя Козлова колхозницăсем ĕç нормине 150 процент таран тултараççĕ. Шкул ачисен çуршар норма тултармалла, çав вăхăтрах Василиса Трухонова Клавдия Петрова мăн çынсемпе танах ĕçлеççĕ.

«Канаш» колхоз хальхи вăхăтра тырпулсене пухса кĕме хатĕрленет. Жнейкăсемпе косилкăсене ситес кунсенчех юсаса ситереççĕ. 35 урапа хатĕр. Витнĕ итем çĕнĕрен иккĕ тăваççĕ.

Максим Горький ячĕпе тăракан колхоз государство умĕнчи парăмсене срокчĕн тултарать. Çак кунсенчех государствăна вăл 120 центнер тырă панă, виççĕмĕш кварталăн аш-какай парса татнă. Тырпулсене çумкурăксенчен тасатнă çĕрте кулленех 50—60 сын ĕçлет. Çак ĕçре подростоксем те ваттисенчен юлмаççĕ.

Колхозниксем те, единоличниксем те государство умĕнчи парăмсене срокчен парса татаççĕ. Сăмахран, колхозница Ольга Яковлева государствăна 1941 çулшăн аш-какай тата ялхуçалăх налогĕ, самообложени, культсбор укçисене пĕтĕмĕшпех парса татнă. Унăн упăшки иккĕмĕш çул ĕнтĕ Хĕрлĕ Çарта тăван çĕршывăн чиккисене сыхласа пурăнать.

— Упăшкам фронтра фашистла юнĕçсенсене çапса аркатать. Манăн тивĕç—тылра, мĕнпур колхозниксем пекех, государство умĕнчи парăмсене срокчен парса татса, Хĕрлĕ Çара фронтра çĕнтерӳ тума пулăшасси пулать, — тет Яковлева юлташ.

Мăкăр ялсоветĕнчи единоличниксем халь кĕперсене юсаççĕ. Обществăллă картасене 400 метр ытла тытнă.

«Хавас» колхозра шкул ачисем пуçарнипе пысăк пĕве тунă. Пĕве тунă çĕрте подростоксенчен уйрăмах Ольга Сергеева, Клавдия Иванова, Александр Сапожников, Мария Игнатьева лайăх ĕçленипе палăрать тумалла. Пĕтĕмĕшпе илсен, колхоз тырпулсене пухса кĕме хатĕр, государствăна 1941 çулшăн аш-какай тата çăмарта парса татнă.

Кармаминчи Чапаев ячĕпе тăракан колхозра 80 лаша тăмалăх вите тăваççĕ. Вите тунă çĕрте икĕ бригада ĕçлет. Хĕрлĕ Çара кайнă колхозниксем вырăнне хĕрарăмсем ĕçлеççĕ. Çапла, колхозница Анастасия Михайлова хальхи вăхăтра учетчица ĕçне, Александра Николаевăпа Анна Солдатова бригадирсен ĕçне туса пыраççĕ. Çак кунсенче колхозниксем тырпулсене пухса кĕмелли плана çĕнĕрен пăхса тухрĕç. Уборка срокне 5 кун кĕскетрĕç. Кĕлте кӳрес, капансем тăвас ĕçре хĕрарăмсемпе ватă колхозницăсене ĕçлеме çирĕплетрĕç..

Уборка вăхăтĕнче ача яслисем уçаççĕ. Продуктсене хатĕрлесе хунă, кадрсем çителĕклĕ.

П. НИКОЛАЕВ.

Рабочисем СССР Верховный Совечĕн Президиум Указне ырлаççĕ

Шупашкар горисполкомĕн промкомбинатĕнчи рабочисем СССР Верховный Совет Президиумĕ ĕç вăхăчĕн çĕнĕ режимĕ çинчен кăларнă Указа питĕ ырлаççĕ.

— Фронт валли ĕçленĕ чухне эпир ывăннине пĕлместпĕр, хамăрăн мухтавлă Хĕрлĕ Çара производствăрт ударлă ĕçленипе пулăштатпăр. Фашистсене çапса аркатассишĕн пыракан кĕрешӳре ĕçе вăхăтпа шутлама кирлĕ мар,—теççĕ рабочисем.

СССР Верховный Совет Президиумĕ ĕç вăхăчĕн çĕнĕ режимĕ çинчен Указ кăларнă кунах вуншар рабочи пысăк тухăçлăхпа ĕçлерĕç.

Чăвашстройтрестĕнче ĕçлекен рабочисем СССР Верховный Совет Президиумĕ ĕç вăхăчĕн çĕнĕ режимĕ çинчен кăларнă Указпа тĕплĕн паллашрĕç.

— Халĕ кану вăхăчĕ мар, усал тăшмана çĕр çинче çĕмĕрсе пăрахнă хыççăн канăпăр,—теççĕ рабочисем.

Халĕ пирĕн çĕршыв мĕнле обстановкăра тăни пирĕншĕн паллă. Тăшмана çĕмĕрсе тăкмалла, çĕмĕрсе тăкатпăр та. Эпир вăхăта шута илмесĕр ĕçлеме пулатпăр. Эпир хамăра мобилизациленĕ тесе шутлатпăр, хамăрăн вырăнта пирĕнтен çĕршыв мĕн чухлĕ ыйтать, çавăн чухлĕ ĕçлеме пулатпăр.

Пурте тăван çĕршыв валли!

ЭЛЕК. Районри предприятисемпе артельсем, колхозсем тата учрежденисем пысăк тухăçлăх кăтартса ĕçлеççĕ. Нумай артельсем, предприятисем хăйсен çурçул планĕсене срокчен тата ытлашшипех тултарчĕç. Сăмахран, сӳскантăр завочĕ ултă уйăхри плана пилĕк уйăх хушшинче тултарнă. Тимĕрçкассинчи промартель çулталăкри плана 70 процент, Пĕчĕк Тукташри промартель çурçулти плана 106 процент ытларах тултарнă. Уйрăм рабочисем икшер-виçшер норма тултарса пыраççĕ.

Рабочисем, колхозниксем хушшинче производствăллă çĕкленӳ вăйланса пырать. Вĕсем иртĕнсе кайнă фашистсем ирĕклĕ социализмлă асла тăван çĕршыв çине тискеррĕн тапăннăшăн гарăхаççĕ тата ылханаççĕ. Рабочисемпе колхозниксем дисциплинăна çирĕплетеççĕ, ĕç тухăçлăхне ӳстереççĕ.

Нумай колхозсем хамăр çĕршыва тата Хĕрлĕ Çара пулăшас шутпа государство умĕнчи обязательствăсене срокчен тултараççĕ. Ехремкасси тата Хуравар колхозĕсем государство умĕнчи мĕнпур обязательствăсене тултарнă. Вырăс Сурăм колхозăн членĕсем икĕ кун хушшинче заемшăн виçĕ пин тенкĕ укçа пухса панă.

Предприятисемпе артельсенче, колхозсенче тата машинно-тракторнăй станцинче хĕрарăмсен активлăхĕ пысăк. Вĕсем фронта каякан арçынсем вырăнне ĕшăнаççĕ, çĕнĕ ĕçе çине тăрса вĕренсе, нормăсене ытлашшипех тултараççĕ. Машинно-тракторнăй станцинче фронта кайнă 12 тракторист, пĕр комбайнер, 18 плугарь вырăнĕсене хĕрарăмсем йышăннă.

Ф. ДАНИЛОВ.

* * *

ИШЛЕЙ. Мăн-Катраçри промартель членĕсем Германин хура çăханĕсене хирĕç çапăçакан паттăр Хĕрлĕ Çара, Тинĕс-Çар Флотне тата Авиацине пулăшса пырас майпа пĕтĕм вăй-халне хурса ĕçлеççĕ, ĕç тухăçлăхне кулленех ӳстерсе пыраççĕ. Артель июнь уйăхĕнчи плана икĕ хут ытла тултарчĕ.

Артель членĕсем продукци туса кăларас плана ытти уйăхсенче те тултарса пырассишĕн пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ.

Н. ЯШКОВ.

* * *

Урса кайнă фашистсем пирĕн социализмлă тăван çĕршыв çине тискеррĕн тапăннăшăн Шупашкарти тир-çăран комбинатĕнчи рабочисемпе служащисене тата инженерно-технически работниксене хытă тарăхтарса ячĕ. Комбинат коллективĕ фашистла вăрă-хурахсен ирсĕр ĕçне организованно тата дисциплинăллă пулнипе, ĕç тухăçлăхне темиçе хут ӳстернипе ответлет. Çапла тунипе Хĕрлĕ Çара хăвăртрах çĕнтерӳ тума пулăшать.

Тир-çăран пехĕнчи рабочисем кулленхи нормăна 150 процентран каялмар тултарса ĕçлеççĕ. Çăван пекех заготовка тата утиль цехĕсем те нормăна ытлашшипех тултараççĕ. Карабаков, Шаранова, Павелина, Ефремов юлташсем кашни кунах икшер норма тăваççĕ. Кун пек рабочисемпе работницăсене кунта нумай илсе кăтартма пулать.

Хĕрлĕ Çар ретне тухса кайнă рабочисемпе мастерсен станокĕсем патĕнче хĕрарăмсем ĕçлеме тытăнаççĕ. Воробьева юлташ атă-пушмак цехĕн мастерĕ пулса ĕçлет. Скачкова, Данилова тата ытти хĕрарăмсем те маларахпа арçынсем ĕçленĕ станоксем çинче ĕçлеме тытăннă.

М. СМЕТАНИН.

* * *

Фашистсен урса кайнă йыттисем пирĕн аслă çĕршыв çине вăрçăпа килсе тапăнни Сосновкăри хăма çуракан заводри рабочисене хытă тарăхтарать.

— Фашистсем пирĕн телейлĕ çĕршыври халăха хăйсен чури туса хума ĕмĕтленеççĕ пулас. Паллах, фашистла бандитсен тискер ĕмĕчĕ нихăçан та пурнăçа кĕрес çук! Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар ун пек çĕлен-калтасене пĕр хут кăна мар çапса аркатнă, халĕ те ним юлмичченех пĕтерсе хурĕ. Тăшмана хирĕç тухса, ăна çирĕп отпор пама рабочисем те, работницăсем те, яланах хатĕр,—тет работница-стахановка Татьяна Анискова.

Мобилизаци пуçлансан тепĕр куннех рамщик Мартынов юлташ фронта кайрĕ. Красноармеец арăмĕ Татьяна Анискова рамщик пулса ĕçлеме тăчĕ. Сменăри нормăна вăл яланах 130—135 процент таран тултарать.

И. КУЗНЕЦОВ.

Колхозниксем ĕçпе ответлеççĕ

СОВЕТСКИ. Фашистла Германин урса кайнă ирсĕр çĕлен-калтисем тата юн ĕçме юратакан Гитлерĕн йыттисем пирĕн чечекленсе ӳсекен тăван çĕршыв çине сĕмсĕрленсе тапăннине хирĕç ответлесе, колхозниксем обязательнăй поставкăсене срокчен парса татассишĕн тата заем укçине хăвăртрах тӳлессишĕн тăрăшаççĕ.

Анат Сăнарти «Новый путь» колхоз кăçалхи çулшăн тĕштырă памалли плана 50 процент тултарнă. Кунсăр пуçне кăçалхи çулшăн аш-какай парса татса, Хĕрлĕ Çара пулăшма 150 килограмм аш-какай панă.

Чемей ялсоветне кĕрекен «Страж революции», «Сеятель» колхозсем те государство умĕнчи обязательствăсене, тĕштырăсăр пуçне, пĕтĕмпех парса татрĕç. Кунта коммунистсене уйрăм участоксем çумне çирĕплетнĕ. Вĕсем колхозниксемпе колхозницăсене халĕ пулса иртекен событисем çинчен тĕплĕн ăнлантарса параççĕ.

Кивуйри «1 Мая» колхозра государство умĕнчи обязательствăсене срокчен тултарассишĕн тăрăшаççĕ. Колхозниксем Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заемне çырăннă укçине пĕтĕмпех тӳлесе татрĕç.

Якаткасси ялсоветне кĕрекен «Смычка», «Восход» тата «Волна революции» колхоз членĕсем, фашистла Германин вăрă-хурахла бандисене ответлесе, шкула пĕр кун хушшинче 66 кубометр вутă турттарса пачĕç.

Н. МИХЕЕВ.

* * *

ÇĔРПУ. Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ радио тăрăх тухса каланă сăмаха районри колхозсенче тулли кăмăлпа кĕтсе илчĕç. Хальхи вăхăтра чылай колхозсенче митингсемпе пухусем пулса иртеççĕ. Йĕкĕрвар ялсоветĕнчи «Шурăмпуç», «Кăганар», «Славаш», «Оборона» колхозсенче пухусем пулса иртнĕ. Колхозниксем пухура пĕрин хыççăн тепри тухса кĕске те татăклă сăмахсем каланă.

— Эпир кунта хастарлă ĕçлесе хамăр çĕршывăн оборонине çирĕплетсех пыратпăр. Хамăрăн государствăна тата тăван Хĕрлĕ Çара мĕн кирлине пĕтĕмпех паратпăр. Тăшмана çĕнтеретпĕрех!, — тенĕ «Оборона» колхоз членĕ Павлов.

Тăшман пирĕн çĕршыв çине ирсĕрĕн тапăннине ответлесе, колхозниксем государство умĕнчи обязательствăсене срокчен тултарма, тырпулсене пухса кĕме кăтартуллă хатĕрленме пуласçĕ.

И. ПЕТРОВ.

* * *

ШАХАСАН. Районри колхозсенче 1941 çулти обязательство шучĕпе государствăна тырă парасси сарăлсах пырать. «III Интернационал» колхоз 42 центнер, Шмидт ячĕпе тăракан колхозпа «Правда» колхоз 50-шар центнер аванс шучĕпе леçсе панă.

Г. ЕФИМОВ.

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. «Красное Сормово» колхозра производствăллă активлăх ӳссех пырать. Халĕ пирĕн колхозниксем хĕрсех уборкăна хатĕрленеççĕ. Кунпа пĕрлех государство умĕнчи обязательствăсене срокчен тултараççĕ. Июнĕн 24-мĕшĕнче 72 центнер тĕштырă, 9 центнер аш-какай леçсе панă.

Пирĕн ялсоветри колхозсем фашистсен ирсĕр ĕçне хирĕç организованно тата дисциплинăллă пулнипе, колхозсене кунран-кун çирĕплетсе пынипе ответлеççĕ.

Г. АНТОНОВ.
Ялсовет исполкомĕн председателĕ.

* * *

ИШЛЕЙ. Фашистла Германия пирĕн юратнă тăван çĕршыв çине бандитла тапăннине ответлесе, Вăрман-Сюктер ялсоветĕнчи «Парижская Коммуна» колхоз колхозникĕсемпе колхозницисем государство умĕнчи обязательствăсене срокчен тултараççĕ. Колхоз аш-какай, сĕт-çу, çăмарта, çăм памалли обязательствăсене 1941 çулшăн пĕтĕмпех тултарнă. 1942 çулшăн та 31 килограмм аш-какай панă. Çăван пекех ку колхозри колхозниксемпе колхозницăсем те государство умĕнчи парăмсене вăхăтра тултарса пыраççĕ.

«Ыраш», «Красное Знамя» «Автогигант» колхозсем сĕт-çу, çăмарта обязательствисене пĕтĕмпех тултарчĕç.

Е. ТЮРИН.

* * *

ЕТĔРНЕ. Чупайри Киров ячĕпе тăракан тата Урапакассинчи «Правда» колхозсем государствăна çăмарта памалли плана тултарчĕç. Государство умĕнчи обязательствăна тултарнă хыççăн, колхозсемпе колхозниксем базарсене тухса çăмарта ытларах сутма пуçларĕç.

М. ДАНГЕР.

* * *

ИĔПРЕÇ. «Тымар» тата «Костер» колхозсенчи колхозниксем Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заем укçине çĕр проценчĕлех тӳлесе татрĕç. Иĕпреç поселокĕн совечĕ иккĕмĕш кварталти финанс планне 103 процент ытла тултарчĕ. Ку поселокра пурăнакан Н. Ефимов (унăн виçĕ ывалĕ Хĕрлĕ Çарта) укçа-тенкĕ обязательствисене пĕтĕмпех тултарчĕ.

Килхуçи хĕрарăмĕ Клавдия Захарова страховани укçине парса татнă чухне çапла каларĕ:

— Тăван çĕршыв çине тăшман тапăннă вăхăтра эпĕ государство умĕнче парăмлă пулма пултараймастăп. Эпĕ паракан укçа нумай мар пулин те, тăван çĕршыв вăй-хăватне татах та çирĕплетме кайтăр.

Государство умĕнчи обязательствăсене пурнăçа кĕртсе, колхозниксем хамăр тăван çĕршыва чĕререн юратнине кăтартса парасçĕ.

В. ДЕФЕРАН.

Сталин юлташ радио тăрăх тухса каланă сăмах пирки ютçĕршывсенчи хаçатсем мĕн çыраççĕ

США

НЬЮ-ИОРК, июлĕн 5-мĕш. Сталин юлташ радио тăрăх тунă выступлени çинчен Америкăри хаçатсем халĕ те тимлĕн çыраççĕ. «Балтимор Сен» хаçат çапла çырать: Сталин сăмахĕ совет халăхĕн моралĕ шухăшне тата ытларах çирĕплетет. Хĕрлĕ Çăран тĕп вăйĕсем, Сталин каланă тăрăх, çалăçăва халь çеç кĕреççĕ-ха. Çакă вăл мĕне пĕлтерет: хальхи операцисем чăн-чăн кампанин пуçламăшĕ кăна пулма пултараççĕ.

Хартфордра (Коннектикут штачĕ) тухакан «Курант» хаçат: пĕтĕм вырăс халăхĕ Германин тапăнса кĕнĕ войскисемшĕн тĕрлĕрен йывăрлăхсем туса хума, вĕсен мĕншăн планĕсене салатса яма пултарасси пирки Сталин çирĕпшĕн шанать, тесе пĕлтерет.

Филадельфире тухакан «Рекорд» хаçат çапла çырать: тăшмана валли нимĕн те хăвармалла мар, тесе Сталин чĕнсе калани питех те пысăк пĕтерĕшлĕ пулса тăрать, мĕншĕн тесен Наполеона поражени кӳме Российăна çавăн пек тактика май панă.

Бриджпортра (Коннектикут штачĕ) тухакан «Телеграмм» хаçат çапла çырать: Сталин сĕнĕ стратегиллĕ план СССР положенине çăмăллатма, нимĕçсемшĕн пысăк йывăрлăхсем туса хума пултарать.

«Нью-Йорк таймс» хаçат «Норт Америкэн Ньюспейперс Альянс» агентствин Мускаври корреспонденчĕн, Америкăри паллă писательсĕн Колдуэллăн пĕлтерĕвне пичетлесе кăларнă. Колдуэлл Хĕрлĕ площаде пухăннă москвичсем Сталин юлташ радио тăрăх сăмах каланине тимлĕн те лăпкăн итлени çинчен çырса кăтартнă. Колдуэлл çапла кăтартса парать: Сталин юлташ хăйĕн сăмахне вĕçленĕ хыççăн халăх хушшинчен пĕр хĕрарăм çапла калана: «вăл питех те нумай ĕçлет, эпĕ тĕлĕнетĕп: унăн хăçан пулать-ши вăхăт сывăрма? Эпĕ унăн сывлăхĕшĕн канăçсăрланатăп». Писатель çапла паллă тăвать: «халăх хушшинче пулнă ытти çынсем те çак хĕрарăмпа килĕшнĕ пулмалла».

«П. М.» хаçат июлĕн 3-мĕшĕнче каçхине Колдуэлл Мускавран радио тăрăх панă пĕлтерĕве пичетлесе кăларнă, унта: Германие хирĕç вăрçма СССР граждăнла тата çар енĕпе мĕнпур вăйсене мобилизацилерĕ, тесе каланă.

Англия

ЛЮНДОН, июлĕн 5-мĕш. Англири «Ивнинг Стандарт» хаçат Сталин юлташ радио тăрăх сăмах тухса калани çинчен умстатья çырса кăларнă. Умстатьяра çапла каланă: «Сталин сасси араслан сасси пек янăрарĕ. Унăн халăхĕ тигр пекех кĕрешет, хастарлăн, хăюллăн тата татăклăн кĕрешекен 180 миллион чухлĕ тигрсем çĕнтерӳ тăвичченех чăтма пултарĕç. Çакă вăл вăрçăн питех те кирлĕ факторĕ, ытти тĕп факторсене пĕтерсе хуракан фактор пулса тăрать. Сталин хыйĕн халăхне, çапăçусем хирĕнче выляса янă пулсан та, нихăçан та каялла чакмалла мар пулма вĕрентет. Хăйсен пуянлăхĕпе чапа тухнă çĕнĕ территорисене Гитлер çарĕсем тытса илсен, вĕсем ишĕлчĕксене, çунакăн уйхирсене, çĕмĕрсе тăкнă чугунçулсене çеç курĕç. Вĕсене хыçалтан кашни чӳречеренех снайперсем хăратса тăрĕç. Вĕсем курайманлăх мĕн иккенне хăйсем çинче тӳссе пĕлĕç. Гитлер большевизма хирĕç хĕрес-лĕ поход тумашкăн континента пĕрлештерме шутланă. Ун вырăнне вăл Европăра фашизма хирĕç хĕрес-лĕ поход тумашкăн çĕнĕ вăйсене хускатрĕ. Гитлерăн вăрçăри хăватлă машини хĕвелтухăçнелле çул тытрĕ, вăл каламасть çук пысăк çăпăçăва кĕрсе кайнă, ун пек çапăçу çак планета çинче халиччен пулман-ха. Эпир пĕлетпĕр, Совет Союзĕ татăклăн хирĕç тăрса çапăçни Гитлерăн хăйĕн чапĕшĕн çеç тăрăшнисене çĕмĕрсе тăкать. Анчах çак результата мĕнле майпа тумаллаха? Мĕн тума шутлатпăр-ха эпир? Хальхи вăхăтра мĕн тăватпăр эпир, çакă вăл пире пысăк майсем туса парать. Анчах, та ку çителĕклĕ-и-ха? Пире Европăран уйăрса тăракан ансăр проливăн лешенче таçта çити тăсăлакан шыв хĕрри выртать. Эпир тинĕс çинче пуçпулса тăратпăр, Германи авиацийĕ хĕвелтухăçĕнче кĕрешнĕ чухне, эпир сывлăшра та пуçпулса тăрăпăр. Çав ансăр проливăн лешенче базăсем пур, вĕсене пĕтерсе тăкмалла, боеприпассен склачĕсем пур, вĕсене взрыв туса çĕмĕрмелле, вырăнти диверсантсем пур, вĕсене пулăшмалла.

ЛОНДОН, июлĕн 7-мĕш. (ТАСС). Лондонри пичет Сталин юлташ радио тăрăх тухса каланă сăмаха çаплах комментарисем парать. Англин паллă публицисчĕ Гарвин «Обсервер» хаçатра çапла çырать: Сталин сăмахĕ халиччен пулман вăй-хăватпа тата хăюллăхпа оборонăна чĕнет. Сталин нимĕн те пĕчĕклетмест. Вăл совет çарĕсем мĕнпур вăйсене мобилизацилеççĕ тата çапăçăва тухаççĕ, тесе питех те тĕрĕс калать. Сталин çар материалĕсен производствине кăнтăрла та, çĕрле те ӳстерме чĕнет. Вăл налетчиксем тата вăйлăн хирĕç тăракан çарпа тĕл пулĕç тесе пĕлтерет. Сталин сăмахĕ нацистсене хăйсене халиччен нимĕн те хумхантарман пек хумхантарчĕ.

Юлашкинчен Гарвин çапла çырать: «Сӳлте каланисем Англи халăхне çитес уйăхсенче хăйĕн ĕçне аслăлатса вăйлатма кирли çинчен кăтартса парааççĕ. Эпир хамăрăн хăрушлăха сирсе ярас шутпа, вырăс халăхне пур средствăсемпе те пулăшма тивĕçлĕ. Пирĕн те, вырăс халăхĕ пекех, çар хатĕрĕсене халиччен пулман хисеппе туса кăлармалла».

Германия тата Австрия

БАЗЕЛЬ, июлĕн 5-мĕш. Кунта Австрирен тата Германирен килсе çитнĕ çынсем каласа панă тăрăх, Сталин юлташ радио тăрăх каланă сăмахăн содержанийĕ нимĕçсемпе австри халăхĕсен анлă снйĕсемшĕн паллă пулса тăнă тата вĕсене çавтери хытă интереслентернĕ. Акă мĕн каласа парать нейтральнăй пĕр çĕршыври журналист: Австрипе Германири халăхăн чылай пысăк пайĕ фашистсем ултăлă майпа СССР çине нихăçан илтменле тапăнчи пирки тĕлĕнмеллипех тĕлĕннĕ. Гитлер декларацийĕпе Риббентроп меморандумĕ кунта çавтери хытă тарăхтарса янă. Халăх хушшинчи çав çынсем Совет Союзĕ çак ĕç çине мĕнле ответлессине калама çук хытă кĕтнĕ. Сталин выступленийĕн содержанийĕ халăха паллă ан пултăр тесе, Германи власĕсем чи çирĕп мерăсем йышăннă пулсан та, Сталин мĕн каланине пиншер çынсем йăлтах пĕлеççĕ. Паллакансем, тусĕсем тата ашшĕ-амăшĕсем Сталин выступленийĕн содержанине пĕр-пĕрине каласа панă. Унăн тĕрĕс, хăюллă тата ĕнентерӳллĕ сăмахĕсем нимĕçсемпе австриецсене Совет Союзĕпе Германи хушшинче пуçласа янă вăрçăн чăн-чăн сăлтавĕсене уçса кăтартрĕç тата Гитлерăн улталăвĕ те юлă агрессине тăрă шыв çине кăларса палăртрĕç. Германири халăхсем, — вĕсене унта Германи хĕçпăшалĕн «халиччен пулман çĕнтерĕвĕсем» çинчен тĕрлĕрен майпа суйса кăтартаççĕ, — Сталин юлташ выступленийĕнчен çакна пĕлнĕ: пĕтĕм совет халăхĕ, тăван çĕршыва хӳтлеме çĕкленнĕскер, сирĕппĕн, пĕлсе çапăçать, нимĕçсен фашистла чи лайăх дивизийĕсене Хĕрлĕ Çар çĕмĕрсе тăкнă.

Иккĕленмелли çук, тенĕ малалла журналист, Германипе Австрири халăхсен ытларах пайĕ СССР енче, мĕншĕн тесен, вăл совет халăхĕн интересĕсемпĕн кăна мар, тата Германи фашизмĕн пусмăрĕ айĕнче пурăнакан Европăри мĕнпур халăхсен интересĕсемшĕн те кĕрешет.

Ирĕклĕхшĕн пыракан çак аслă вăрçăва Европăри тата Америкăри халăхсем, çав шутрах гитлерла заправилăсем чуралăха кĕртсе ӳкернĕ Германи халăхĕ те, пирĕн шанчăклă союзниксем пулса тăрĕç, тесе Сталин каланă çак сăмахсене австрипе Германири халăхсем, хăйсене хирĕç террор туса пынине пăхмасăрах, Сталин выступленийĕпе пĕтĕм кăмăлтан пĕр шухăшлă пулни те çирĕплетсе парать. Юлашки кунсенче çуртсем çумне фашистсене хирĕç сыра-сыра çапакан лозунгсен хисепĕ ӳссех пырать. Çакă вăл ахальтен пулакан япала мар. Çавăн пек сырса çапнисен шутĕнче кӧскен, анчах та пит витĕмлĕн çырнисем пур. Сăмахран, «К чорту Гитлера!», «Долой фашистских палачей!», «Привет Красной Армии!» тесе çырса çапнă.

Швеция

СТОКГОЛЬМ, июлĕн 5-мĕш. Сталин юлташ радио тăрăх тунă выступлени çинчен Швецири хаçатсем пит тимлĕн çыраççĕ. «Дагенс нюхетер» хаçатăн Лондонри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Сталин сăмахне, чи малтанах, совет халăхĕн татăклăн кĕрешес ирĕк-кăмăлне кăтартса паракани вырăнне хурса йышăннă.

СТОКГОЛЬМ, июлĕн 6-мĕш. Швеципи хаçатсем Сталин юлташ радио тăрăх тунă выступлени пирки халĕ те пит нумай çыраççĕ. Провинциисенчи хаçатсем Сталин юлташ выступленийĕ çинчен ятарласах статьясем çырса кăлараççĕ. Хаçатсем: Сталин юлташăн сăмахне Швеци халăхĕн анлă сийĕсем питех те хĕрӳллĕн кĕтсе илнĕ, тесе паллă тăваççĕ. Сталин сăмахĕнчи чăнлăх, тесе çырать «Гетеборгс хандельс тиднинг» хаçат, çавтери лайăх туйăм çĕклерĕ тата ăна вырăс халăхĕн патриотизмĕ тĕлĕшпе Сталин пысăкках шанса тăнине пулать, тесе шутлаççĕ. Вăл вырăссен мораль тĕлĕшĕнчи çирĕплĕхĕ пирки те иккĕленмест.

Япония

ТОКИО, июлĕн 5-мĕш. Паян пур хаçатсем те Сталин юлташ радио тăрăх тунă выступлени çинчен умстатьясем çырса кăларнă.

«Иомиури» хаçат, Совет Союзĕн çар хăвачĕ çинчен тапратса, çапла çырать: Совет Союзĕн çар тĕлĕнчи вăйĕ, чи малтанах, вĕçĕмсĕр аслăн сарăлса выртакан территори, лайăх организациленĕ тата лайăх вĕрентсе хатĕрленĕ Хĕрлĕ Çар, экономикăллă хăватлăх тата пĕтĕм совет халăхĕ патриотла хĕрӳллĕ туйăмпа пурăнни пулса тăраççĕ. Совет власĕ туса хунă хыççăн малтанхи çулсенчех Совет Союзĕ, унăн çар тĕлĕшĕнчен çителĕклĕ таран вăй пулман пулсан та, ытти çĕршывсенчен чылай вăйсăртарах пулнă пулсан та, 1918-1919 çулсенче хăйĕн территорине ютçĕршыв держависен интервенцийĕнчен ăнăçлăн хӳтлесе хăварчĕ. Çакна партизанла кĕрешӳве сарса пынипе тунă, вăл кĕрешӳве совет хресченĕсем хутшăннă пулнă. Хăйĕн сăмахĕнче Сталин, халăха чĕнсе каласа, Германи войскисем йышăннă районсенче партизанла кĕрешӳ меторĕпе усă курма чĕнет. Партизансен ĕçĕсем, советăн çавтери аслă территорийĕ, çавăн пекех вилĕмрен хăраман вырăссен характерĕн уйрăмлăхĕ — çаксем пурте пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăраççĕ.

Болгария

АНКАРА, июлĕн 6-мĕш. Кунта илнĕ сведенисем тăрăх, Болгарири хаçатсем Сталин выступленине халăхран пытарнă, анчах та вăл выступленипе пĕтĕм халăхшăн анлăн паллă пулса тăнă тата вĕсене калама çук пысăккăн интереслентернĕ.

Влаçсем хĕсĕрлеççĕ пулин те, Мускавран параканă радиона пиншер болгарсем итлеççĕ. Сталин выступленине илтсен, вĕсем ун çинчен çĕршыври чи инçетри вырăнсене те пĕлтернĕ.

Сталин выступленийĕ Болгари халăхĕн пĕртен-пĕр хăватлă тусĕ — Совет Союзĕ татăклăнах çĕнтерес тĕлĕшпе болгарсен чĕрине пысăк шанăçлăх кĕртнĕ. Сталин выступленине Болгарири обществăн пур сийĕсенче те анлăн сӳтсе-явнине уйрăмăнах Болгарири прогрессивлă çынсем хушшинче хĕрӳллĕн кăмăлласа йышăннă. Гитлер хушнипе Болгарири хаçатсем Совет Союзне хирĕç туса пыракан ирсĕр ĕçсем чăн-чăн положенине çĕршыври халăхран пытарма пултарĕç, тесе шикленнĕ журналистсем. Халĕ ĕнтĕ çав çынсем хушшинче тĕрĕслĕхе халăхран пытарма май çукчине ăнланса илнĕ.

Ютçĕршывсен Софи хулинчи корреспонденчĕпе каласнă чухне Болгарири пĕр учитель пурин шухăш-кăмăлне те кăтартса панă. Вăл çапла каланă: пирĕн çичет нимĕçсене çĕнтерме çукки çинчен çырать, вырăс халăхĕ çинчен киревсĕр хыпарсем саратъ. Пире улталамăн. Эпир тăванлă вырăс халăхĕн вăйĕпе хăватлăхне лайăх пĕлетпĕр. Вырăссем ютçĕршывсен пусмăрĕнчен ирĕке тухас çĕрте Болгарие çĕнтерӳ тума пулăшрĕç. Сталинăн ху выступленийĕ çак расра та çапла пулассине кăтартса пачĕ. Гитлерла çуçăсем, сутăнчăк писаксем темĕн тĕрлĕ киревсĕррĕн хăтлансан та, вĕсем болгар халăхне вырăс халăхĕнчен уйăрма пултараймĕç. Эпир вырăссен кĕретвĕнче пĕтĕм чĕререн вĕсем майлă тăратпăр, фашистла çĕлен-калтасене хирĕç кĕрешнĕ çĕрте вăй çитнĕ таран пулăшăпăр.

Турция

СТАМБУЛ, июлĕн 6-мĕш. «Лацис», «Ени сабах» тата «Тасвири эффкяр» хаçатсем Сталин юлташ радио тăрăх каланă сăмахăн текстне пĕтĕмпех пичетлесе кăларнă.

«Тасвири эффкяр» хаçат Сталин сăмахĕ çинчен çырса, çапла паллă тăвать: совет çарĕ Германия тапăннине çапса çĕмĕрес шутпа вăйлăн хирĕç гăрса çапăçать. Паллах, совет халăхĕ мĕн вĕçне çитичченех çирĕплĕн тăрса çапăçĕ. Хаçат çапла паллă тăвать: Сталин выступленийĕн уйрăмах çак пайĕ калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрать: совет халăхĕ отечественнăй вăрçă туса пырать, вăл çав вăхăтрах тата Германия чуралăха кĕртсе ӳкернĕ халăхсене те ирĕке кăлармалли вăрçă пулса тăрать.

Китай

ШАНХАЙ, июлĕн 6-мĕш. Китайри чи пысăк хаçатсем Сталин юлташ радио тăрăх тунă выступлени текстне пĕтĕмпех пичетлесе кăларнă. Хаçатсем çав выступлени çинчен умстатьясем çырса кăлараççĕ, ăна тĕрĕс тата тĕллеве уçăмлăн палăртса параканă сăмах вырăнне хурса хахлаççĕ, вăл фашизма çĕмĕрсе тăкасси пирки шантарса тăрать, тесе çырааççĕ хаçатсем.

«Порт чайна дейли нью» хаçат çапла çырать: Сталин сăмахĕнче ĕçсен чăн-чăн положенине кăтартса панă. Сталин нимĕне те пытарман. Чăнлăхăн образецĕ пулса тăракан çак сăмах вырăс халăхĕ вĕçне çитиех кĕрешме пуллине тĕнчене кăтартса парать. Халăх руководителĕ çавăн пек каланинĕ пĕтĕм тĕнче кăмăллама тивĕçлĕ. Çак питех те кирлĕ: Совет правительстви пичетлесе кăларакан сводкăсем тĕрĕс сводкăсем пулса тăраççĕ, Германин официальнăй пĕлтерĕвĕсем вара пĕрре те тĕрĕссине кăтартмаççĕ.

«Чайна пресс» хаçат çапла çырать: вăрçă мĕнпе вĕçленесси Совет Союзĕшĕн лайăх пуласси пирки иккĕленмелли çук.

«Шэньчжоужибао» хаçат умстатьяра çапла çырать: Сталин сăмахĕнче çĕнтерӳ тăвас шутпа татăклăн çапăçма тата киреç-мĕне жертвăсем тума та хатĕр тăни тапса тăрать. Совет Союзĕ Гитлера хирĕç Наполеона хирĕç кĕрешнĕ методсемпех кĕрешет.

Гитлер çакăн çинчен мăннă: Совет Союзĕн территорийĕ 20 миллион тăваткăл километртан иртет, ӳнăн халăх йышĕ 200 миллион çын шутланать. Хĕрлĕ Çар вăйлă çар пулса тăрать. Çавăн пек условисенче Совет Союзĕпе вăрçма питех те хăрушă. Татăклă фактор вăл Совет Союзĕ мĕн çĕнтерничченех çирĕплĕн тăрса вăрçма йышăнни пулса тăрать. Çак енчен илсен Сталин сăмахĕ истори тĕлĕшĕнчен пысăк пĕтерĕшлĕ пулса тăрать. Совет Союзĕ нацизма çĕмĕрсе тăкатех тата Германи военщинин хаяр пусмăрĕ айĕнче пурăнакан Европăри халăхсене ирĕке кăларĕ.

Греция

СТАМБУЛ, июлĕн 6-мĕш. Грецине пусмăра персе чикнĕ фашистсен хаяр цензурине пăхмасăрах, Сталин сăмахне Греци халăхĕн анлă массисем итлеме пултарнă. Афины хулинче, Салоникире тата Греции ытти хуласенче çак сăмаха хĕрӳллĕн сӳтсе-тваççĕ. Вăрттăн кăларакан листовкăна анлăн сараççĕ, унта Греци халăхне Германи фашизмне хирĕç татăклăн кĕрешме чĕнсе каланă.

«Сталин,—тесе каланă листовкăра, — ирĕклĕ совет халăхне çеç мар чĕнсе каланă, çавăн пекех вăл французсене, норвежецсене, датчансене, голландецсене, чехсене, поляксене, сербсене тата пире, грексене те,—Германи захватчикĕсен пусмăрĕ айĕнче асапланакан мĕнпур халăхсене те чĕнсе каланă.

Отечественнăй аслă вăрçă туса пыракан Совет халăхĕпе пĕрле çав çĕршывсенчи халăхсем те хăйсен ирĕклĕхĕшĕн, хăйсен чысĕшĕн таса вăрçа çĕкленĕç. Фашизма хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе Сталин юлташ палăртнă боевой программа пирĕншĕн те боевой программа пулса тăрать. Тăшманшăн тата ăна пулăшакансемшĕн пуриншĕн те тӳсмелле мар йывăр условисем туса хурар тата тăшмансене кашни утăмрах йĕрлесе, вĕсене пĕтерсе тăкар, вĕсен мĕнпур мероприятийĕсене аркатса ярар. Грецине ирĕке кăларар, фашистла йытăсене пĕтерсе хурар!»

Норвегия

СТОКГОЛЬМ, июлĕн 6-мĕш. Ослоран пĕлтернĕ тăрăх, Норвегири «Радис свсбоды» ятлă вăрттăн ĕçлекен радиостанци Сталин юлташ сăмахĕнчи уйăрăм вырăнсене радио тăрăх панă. Передачăна пиншер норвежецсем итленĕ, вăл передачăра мĕнпур халăхсен хаяртан та хаяр тăшмане хирĕç — Германи фашизмне хирĕç геройла кĕрешекен Совет Союзĕнчи халăхсене пур енчен те пулăшма пулни çинчен каланă.

Сталин сăмахĕ Норвегин вăрттăн, пытанса кĕрешекен патриочĕсен, ССР Союзĕнчи халăхсемпе çумма-çуман тăрса фашизма пĕтерсе тăкма пĕтĕмĕшпех хатĕр тăракан патриотсен речĕсене çĕнĕ вăйсем хутшăнтарнă. (ТАСС).

Финляндия

СТОКГОЛЬМ, июлĕн 7-мĕш. (ТАСС). Кунта Финляндин тĕрлĕрен вырăнĕсенчен килсе тăракан финсемпе шведсем Сталин радио тăрăх тухса каланă сăмах халăхсен сарлака массине паллă пулни çинчен каласа параççĕ. Нумай йышлă финн патриочĕсем Сталин каланипе пĕр шухăшлă. Сталин юлташ сăмахĕ, унччен малтан та çĕршывра хăйсене тулли хуçа пек тытакан фашистла оккупантсем çине тăшманла пăхнă финн халăхĕн фашистсене курайманлăхне вăйлатрĕ. Журналистсем хушшинче Швецине куçса пынă пĕр финкăна Туркури чугунçул çинче конторщик пулса ĕçлекен упăшкинчен панă çырупа питех интересленеççĕ. Акă мĕн çырнă çырура:

«Вуниккĕмĕш кун ĕнтĕ эпĕ çарта. Пире часах фронта яраççĕ, тесе калаçаççĕ. Эпир час-часах пĕр-пĕринчен çапла ыйтатпăр: мĕне кирлĕ пире вăрçă, мĕн парать вăл пире? Нимĕçсем пирĕн патăрта тулли хуçасем пулса тăчĕç. Вĕсем пире фронта кайма хăваласçĕ, Гитлера тĕнче хуçи тăвассишĕн кĕрешме хăваласçĕ. Анчах эпĕ те, тата ытти финсем те хамăр пуçсене Германи фашисчĕсен интересĕсемшĕн хурасшăн мар. Хăйсем çапăçчăр, эпĕ фронтра мĕн тумаллине пĕлетĕп. Енер Ирие Хакилайненпа тĕл пултăмăр. Вăл Сталин сăмахне радио тăрăх итленĕ, çав сăмаха пĕтĕмпех çырса илме те хăраман вăл. Сталинăн кашни сăмахне эпир чĕререн йышăнтăмăр. Вырăссем чăн-чăнах хăюллăн çапăçаççĕ. Эпир пурте ĕненетпĕр: Сталин каланă пек, вырăссем хăйсен тăван çĕршывшĕн кăна мар, пирĕншĕн—финсемшĕн, норвежецсемшĕн тата фашистла пусмăра кĕрсе ӳкнĕ мĕнпур халăхсемшĕн те çапăçаççĕ. Хĕрлĕ Çар çĕнтерессе эпĕ чĕререн кĕтетĕп, шанатăп. Фашистла сыснасене яланлăхах пĕтерес пулать. Çавăн чухне кăна пирĕн пусмăр тĕп пулĕ. Эпĕ анчах мар, нумайĕшĕсем çакăн пек шутлаççĕ. Эпир пĕр-пĕрне пĕр сăмахсăрах ăнланатпăр. Ахальтен мар шюцкоровецсем тата лапуас палачĕсем хăйсен сăмсисене уснă. Вĕсем пире нимĕç фашисчĕсене сутрĕç, халĕ вĕсем халăх куçĕнчен пăхма хăраççĕ. Тавăрмалли вăхăт часах, часах çитĕ».

Ютçĕршыв корреспонденчĕсен черетлĕ пресс-конференцийĕнче

Ютçĕршыв корреспонденчĕсен июлĕн 7-мĕшĕнче пулса иртнĕ черетлĕ пресс-конференцийĕнче Совет Информаци Бюровĕн начальникĕн заместителĕ С. А. Лозовский Германи çухатăвĕсене танлаштарса илсе кăтартнă. Германи генеральнăй штабĕн Германирен çаратсенче пичетлесе кăларнă официальнăй даннăйсем тăрăх, Германин вăрçă пуçланнă хыççăн иртнĕ çулталăк та 10 уйăх хушшинче нимĕçсен 4.500 самолет тата 2000 танк пĕтнĕ, Совет Союзне хирĕç пуçланă вăрçăн малтанхи 8 кунĕ хушшинче кăна нимĕçсен 1.500 самолет тата 2.500 танк пĕтнĕ.

Çак цифрăсенчен акă мĕн курăнать: нимĕçсен генеральнăй штабĕн планĕсем—хăйсене майлă, чăн-чăн пурнăçра—пачах урăхла.

Нимĕçсемпе вĕсен союзникĕсем ĕçсен чăн-чăн положенине яланхи пекех суйнипе витме хăтланаççĕ. Стефани агентстви: ССР Союзĕнче «хĕрарăмсен полкĕсене тума приказ панă», тесе пĕлтернĕ.

Алла хĕçпăшал тытса фашистла ордасене хирĕç çапăçма хатĕр хĕрарăмсем ССР Союзĕнче миллионшăрăн шутланаççĕ. Анчах эпир хĕрарăмсен батальонĕсем тума шутламан тата шутламастпăр та. Пирĕн арçынсен хисепĕ Германиринчен виçĕ хут нумайрах, вĕсем хăйсем мĕншĕн çапăçнине пурте пĕлеççĕ. Германире вара халăхăн вунă пайĕнчен тăхăр пайĕ Совет Союзне хирĕç вăрçă мĕншĕн пуçланнине пĕлмест. Çакăн çинчен Германи çарĕнчи салтаксем те пĕлмеççĕ. Германи çарĕнче тивĕçе пурнăçа кĕртес ăналанăва каторгăри пек дисциплина хупăрласа тăрать.

Германи оккупациленĕ çĕршывсенчи халăхсем фашистла пусмăрçăсене хирĕç кĕрешеççĕ

НЬЮ-ИОРК, июлĕн 5-мĕш. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, чехсемпе норвежецсем, Шарлоттесвилри (Виргини штачĕ) университетра «Социальнăй проблемăсен институчĕн ларăвĕнче, чехословаки, Польша тата Норвеги çĕршывсенче халăхсен Германине хирĕçле движенийĕ вăйлăн сарăлса пыни çинчен каласа панă. Бенешăн Америкăри личнăй представителĕ Папанек, чехсем хăйсен пусмăрçисене хирĕç тăрас çĕрте мĕнпур май килнĕ средствăсемпе йăлтах усă куракаçĕ, тесе пĕлтернĕ Çавăнпа та ĕнтĕ нимĕçсен ирĕксĕрех Чехире, Моравинче тата Словакире саботажсене чарса пыма 120.000 çын тăран полицейскисем тытса тăмалла пулнă. Нимĕçсем валли боеприпассем тăвакан заводсенчен пĕринче, тесе каласа парать Папанек, нумаях пулмасть пушар тухнă. Румынирен Германине нефть тултарса ăсатакан цистерна кранĕсене уçнă тесе айăпласа нимĕçсем чехсен 80 железнодорожникне арестленĕ. Хăшпĕр заводсенче приводной ременьсем сухалаççĕ, çавăн пирки заводсем чылай вăхăт хушши ĕçлемесĕр тăраççĕ. Германин контролерĕсем нумаях та пулмасть Берлина чехсемпе словаксен ялхуçалăх предприятийĕсем 30.000 вагон тулă, 26.000 сысна, 45.000 пăру тата 2 000 пуç шултра выльăх пытарса хăварни çинчен пĕлтернĕ. Оккупациленĕ Польшăпа Австри хушшинчи чугунçул çинче, Моравски-Остров тата Бреславль хушшинче ручной гранатăсем тиенĕ темиçе вагон çухалнă. Уншăн икĕ чеха çакса вĕлернĕ. Çапах та гранатăсене тупайман. Пĕр вăхăтра Чехословакин сывлăш флотĕнче пулнă летчикăн нимĕçсене ирĕксĕрех Карлин патĕнчи вăрттăн аэродромăн бензин сыхланакан резервуарĕ патне илсе пымалла пулнă. Вăл резервуара сиктерсе ярать те хăй вилет тата унпа пĕрле Германин 70 салтакĕ вилнĕ.

Норвеги „доброволецĕ“ каласа пани

СТОКГОЛЬМ, июлĕн 7-мĕш. (ТАСС). Журналистсем хушшинче çапла пĕлтереççĕ: Финляндин чиккипе юнашар Хапаранды пунктĕнчен çак кунсенче Финляндине яракан чăссенчен «тарса юлнă» Норвеги «доброволецĕсем» темиçе çын Стокгольм хулине тавăрăннă. Вĕсем каласа панă тăрăх, вĕсем нумай пулмасть Норвегири ĕç повинноçĕн лагерĕсенчен пĕринче пурăннă. Июнĕн 26-мĕшĕнче лагере Германи офицерĕ пынă та, «Финляндие сыхлама» кайма 10 «доброволец» уйăрма хушса приказ панă. Пирĕнтен нумайĕшĕ, тесе каласа парать «доброволецсенчен» пĕри, каторгăллă лагерьтен çăлăнса тухасса шанса, «доброволец» пулма килĕшрĕç. Тепĕр тăватă кунтан эпир Финляндин чиккинче пултăмăр. Пире чикĕ урлă каçас умĕн кĕске вăхăтлăх отпуск панипе усă курса, эпир отрядран тартăмăр.

Чуралăха кĕрсе ӳкнĕ Югославири восстанисем

«Нью-Йорк таймс» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Дрика юханшывĕ çывăхĕнче лараканн сербсен икĕ ялĕнче восстани пуçланса кайнă. Восстани тăвакансем Германи офицерне вĕлернĕ тата икĕ унтер-офицера амантнă. Нимĕçсен карательнăй отрячĕ пĕр ялне вут тĕртсе çунтарса янă тата 20 серба перçе вĕлернĕ. Перçе вĕлернисенчен пĕри хĕрача пулнă. Тепĕр ялĕнче 40 çынна перçе вĕлернĕ. (ТАСС).

Швеци журналисчĕ Совет войскисем çинчен

СТОКГОЛЬМ, июлĕн 7-мĕш. (ТАСС). «Стокгольмс тиднинген» хаçатăн Берлинри корреспонденчĕ Сванстрем хĕвелтухăç фрончĕн малти позицийĕсенче пулнă тата халĕ вăл нимĕç войскисемпе Львов çывăхĕнче пулнă хыççăн çапла çырать: «Нимĕç салтакĕсен вилĕ шăтăкĕсем йышлăн пулни çакăн пек вывод тума май парать: Российăна хирĕç пуçланă поход юн нумай юхтаракан вăрçă пулса тăрать. Чылай вырăнсенче эпĕ нимĕçсен вилĕ шăтăкĕсене нумай куртăм, кашни шăтăка çирĕмшер çын пытарнă. Вырăс салтакĕсен вилĕ шăтăкĕсем сайра-хутра кăна тĕл пулаççĕ».

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕ ВКП(б) Куславкка райкомĕн секретарĕ, ВКП(б) Обкомĕн членĕ

Александр Иванович КРЫЛОВ

кăçалхи июлĕн 6-мĕшĕнче вăхăтсăр вилни çинчен хурланса пĕлтерет тата унăн семьине çак йывăр хуйăха тӳссе иртерме сунать.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕ.

ДОНОР

пулас текенсене

Шупашкар больницин хирурги уйăхĕнче йышăнаççĕ.

Телефон 5-40 3—2.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, 7—97, ялхуçалăхпа промышленность пайĕсен — 0—88, сырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, «Ĕçхĕрарăмĕ» тата «Хатĕр пул» журналсен — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 5055

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ Ь 345. ф. б 38 84 п. л.